Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1938 ҪЕНТАБЕРӖН 21 ЙУНКУН 218(5031) №

Чӑваш Коммунӗ

21-мӗш ҫул тухать

ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗпе Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗн хаҫачӗ

Пӗр №-рӗ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, ред. заместителӗн—3—97, редакци ҫекретарӗн—4—40, парти пурнӑҫ пайӗн—0—85, йалхуҫалӑх пайӗн—4—97, советсен пайӗн—0—88, промышленнӑҫ пайӗн—7—97, йалкорсен пайӗн—2—30, дежурнӑйӗн—6—23.

Пӗтӗм Чӑваш парторганизацишӗн урок

ПСК(б)П Шупашкар хула организацин V-мӗш конференцийӗпе ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗн VII мӗш Пленумӗ Чӑваш парторганизацинчи парти пурнӑҫне тата тепӗр ҫӳлерех пусӑма хӑпартрӗҫ. Вӗсем ПСК(б)П Обкомӗпе унӑн бӳровӗн ӗҫӗнчи пысӑк ҫитменлӗхсене вӑйлӑ прожектӑр пек ҫутатса пачӗҫ.

ПСК(б)П Обкомӗ ПСК(б)П Тӗпкомӗн 1937 ҫулти февраљ-мартри тата 1938 ҫулти йанварти пленумӗсен историлӗ решенийӗсене пурнӑҫа бољшевикла кӗртсе пыман. Обкомӑн пӗрремӗш ҫекретарӗ пулнӑ Г. И. Иванов халӑх тӑшманӗсене—фашисӑмӑн троцкисла-бухаринла, буржуалӑ-националисла агӗнчӗсене хирӗҫ кӗрешмен ҫеҫ мар, вӑл вӗсене хӳй витсе, хӳтлесе тӑнӑ, ответлӑ вырӑнсене лартса пынӑ.

ПСК(б)П Обкомӗн VII-ш Пленумӗ Обкомӑн пӗрремӗш ҫекретарне Иванова политикӑ йенчен шанчӑксӑр ҫын вырӑнне хурса ӗҫрен тата Обком членӗсен составӗнчен кӑларса, унӑн партилехӗ ҫинчен татакан ыйтӑва ПСК(б)П Тӗпкомӗ ҫумӗнчи Парти Контроља Комиҫҫине памала туни питех те тӗрӗс. Ҫакӑ, буржуалӑ националиссен алњинчи подручнӑй пулнӑ етеме, йертсе пыракан вырӑна тӑшманла кивӗ руководствӑ лартнӑ. Вӑл Йетӗрнере райком ҫекретарӗ пулса ӗҫленӗ чухне те, Обком ҫекретарӗ пулсан та пӗрмайах тӑшманла елементсене хӳтлесе пынӑ. Ултавпа, елекле хатланнипе, икӗпитленнипе кана вӑл йулашки вӑхӑтченех Обком ҫекретарӗ пулса йулма пултарнӑ. Вӑл хӑйӗн пӗтӗм ӗҫӗнче тӑшманла елементсем ҫине тайанса тӑнӑ. Критикӑ пуҫарса йама тӑнине вӑл ҫийӗнчех пӗтерсе лартма тӑрӑшнӑ, критиклекен кашни ҫыннах карйериста, елекҫӗне кӑларма тӑрашнӑ, чӑн-чӑн карйериссемпе перестраховщиксем нимен тӗкӗнмесӗр йулнӑ. Ҫавӑн пек, халӑх тӑшманӗсене—Обком ҫекретарӗ пулнӑ Петровпа ытти тӑшмансене тӑрӑ шыв ҫине кӑларас тесе критика ҫарса йама хӑйнашӗн айапсӑр коммуниссене—Ҫиљверстовпа Охотникӑв йулташсене елекҫӗне кӑларнӑ, ҫавӑн пекех—Спасова тӑрӑ шыв ҫине кӑларма тӑнӑшӑн—Стекољщикӑв йулташа, Иванова хӑйне тӑрӑ шыв ҫине кӑларма тӑнӑшӑн Рубљов йулташа елекҫӗне кӑларнӑ. Унтан та ытларах, Стекољщикӑв, Рубљов тата ыт. йулташсене Иванов елекҫӗсем вырӑнне хурса партирен кӑлармала, хӑйне килӗшмен коммуниссене Чӑваш парторганизацинчен ытти организацисене кӑларса йамала тутарнӑ.

Обкомра Иванов хӑй тавра хӑй ҫыннисене—йӑпӑлтатакансене лартса тухнӑ, лешсем вара, пӗр-пӗрне йурас шутпа, партипе государствӑ интересӗсене пӑхӑнмасӑр ӗҫленӗ. Ҫавӑн пек Обкомӑн йертсе пыракан парторгӑнсен пайӗпе уйрӑм сектӑр пуҫӗнче Иванов лартнӑ йӑпӑлтисем—Полтевпа Лесников тӑраҫҫӗ. Вӗсем иккӗшӗ те, Йетӗрнере чухне, Ивановпа пӗрле пысӑк йеркесӗр ӗҫсем тунӑ.

Иванов тӑшманла етемсене хӳтленӗ, вӗсем ҫине тайанса ӗҫленӗ, вӑл тӑшманла кивӗ руководствӑна та сӑтӑрла ӗҫсем тума пулӑшса пынӑ.

Ҫак ӗҫсенче Обкомӑн виҫҫӗмӗш ҫекретарӗ пулса ӗҫлекен Павлӑвӑн политикӑлӑ сӑнсӑпачӗ те илемлӗнех курӑнмасть. Н. П. Павлӑв Чӑваш парторганизацинче ҫӗнӗ ҫын мар. Вӑл Иванов икӗпитленсе ӗҫленисене питӗ лайӑх пӗлсе тӑнӑ. Апла пулсан та вӑл Иванова хирӗҫ тӑман. Вӑл унпа пӗрле Обкомӑн тӑшманла кивӗ руководствине хӳтленӗ. Обкома пыракан сигналсене лайӑх пӗлсе тӑнӑ пулсан та, тӑшмансене тӑрӑ шыв ҫине кӑларма тӑрӑшман. Вӑл политикӑ тӗлӗшенчен шанӑҫсӑр ҫынсем умӗнче хисеп-рен тухасшӑн пулман. Павлӑв Обкомӑн виҫҫӗмӗш ҫекретарӗнче ӗҫлесе хӑйне хӑй бољшевикла работник пулнине, парти ӗҫӗшӗн кӗрешме пултаракан ҫын пулнине кӑтартаймарӗ.

Паллах, ответлаха Обком бӳровӗн ытти членӗсем ҫинчен тата Обкомӑн иккӗмӗш ҫекретарӗ—Дубӑв йулташ ҫинчен те илме ҫук. Вӗсем те, Ивановӑн икӗпитлӗ политикине курмасӑр йулнашӑн, тӑшмансене курмасӑр тӑнӑшӑн, ҫакӑн пек ӗҫсене хирӗҫ тӑманшӑн, халӑх тӑшманӗсене хирӗҫ татаклӑн кӗрешменшӗн ответлӑ.

Халӗ ПСК(б)П Обкомӗн пӗрремӗш ҫекретарӗ пулнӑ Ивановӑн двурушникла политикипе Обкомӑн политикла пысӑк йанӑшӗсене тупса тӑрӑ шыв ҫине кӑларнӑ хыҫҫӑн, Чӑваш парторганизацин ПСК(б)П Шупашкар хула организацин V-ш конференцийӗпе ПСК(б)П Обкомӗн VII-мӗш Пленум решенийӗсенчен тӗрӗс уроксем туса, еҫре пулнӑ йанӑшсене бољшевикла тӳрлетес пулать.

ПСК(б)П Шупашкар хула организацин V-мӗш конференцийӗпе Обкомӑн VII-мӗш Пленумӗ ҫакна кӑтартрӗҫ: Иванов йертсе пынӑ Обком руководстви Чӑваш парторганизацине ПСК(б)П Тӗпкомӗн 1937 ҫулти февраљ-мартри Пленумӗн решенийӗсемпе унта Сталин йулташ кӑтартса панисене тата ПСК(б)П Тӗпкомӗн 1938 ҫулти йанварти Пленум решенийӗсене хирӗҫле ҫулпа йама тӑрӑшнӑ. Вӑл руководствӑ Чӑваш парторганизацинче пытанса йулнӑ халӑх тӑшманӗсене хирӗҫ—фашисӑмӑн троцкисла-бухаринла, буржуалӑ-националисла агенчӗсене хирӗҫ кӗрешес-си—иртнӗ ӗҫ, пулнӑ ӗҫ, халӗ ӗнтӗ парторганизацин черетри тӗп задачӗ вӑл—кивӗ руководствӑра пулнӑ тӑшмансем туса хӑварнӑ сатӑрла ӗҫсен йулашкисене пӗтерес-си ҫеҫ йулать, тенӗ. Парторганизацин политикӑла сыхӑлӑхне вайсӑрлатас шутпа—халӗ ҫӗнӗрен лартнӑ ҫынсем пӗтӗмпех тӳрӗ ҫынсем тесе ӗнентернӗ. Ҫапла вара, троцкисла-бухаринла, буржуалӑ националисла т. ыт. йышши тӑшмансене хирӗҫ хайаррӑн кӗрешесси ҫинчен Сталин йулташ кӑтартса панисене пурнӑҫа кӗртсе пыман.

Парти организацисен пурин те Обкомӑн ҫакнашкал руководствине пула килсе тухнӑ пӗтӗм ӗҫсене критикӑлӑ тишкерсе пӑхса тухас пулать. Пытанса йулнӑ тӑшмансене, бољшевикла критикӑпа самокритикӑна сарма чӑрмантаракансене, тӑшмансене хӳтлесе тӑракансене, тӑшмансемпе вӗсен сӑтӑрла ӗҫӗсен йулашкисене бољшевикла пӗтерме чӑрмантаракансене татӑклӑн тӑрӑ шыв ҫине кӑлармала.

Чӑваш парторганизаци пирӗн партин Ленинла-Сталинла Тӗп Комитечӗ йертсе пынипе хӑйӗн политикӑла сыхӑлӑхне тата ҫӳлерех хӑпартса, чӑн-чӑн бољшевикла самокритикӑна сарса, партилӗ-политикӑлӑ ӗҫе вӑйлатса партипе халӑхӑн пур йышши тӑшманӗсене те,—вӗсем тем пек чейе, тем пек ҫавӑрӑнӑҫулӑ пулсан та,—тата вӗсен сӑтӑрла ӗҫӗсене пӗтӗмпех пӗтерӗ, пӗтӗм чӑваш халӑхне социализм строительствин пур участокӗсенче те ҫӗнӗрен пысӑк ҫитӗнӳсемпе ҫӗнтерӳсем тӑвасси патне илсе пырӗ.

Фашиссем Чехословакине татса валеҫме хатӗрленеҫҫӗ

Лондӑнран пӗлтернӗ тӑрӑх, фашиссем хайсен ҫарӗсене Чехословаки чиккисем патне каплантарса пыраҫҫӗ. Чехословаки чиккипе йунашар Германи хулисенче фашиссен ҫарӗсем тулли йех. Вӑл хуласенчи магазинсене те салтаксем ваљљи казармӑсем туса йышӑнна. Фашиссен ҫарӗсем йӑвӑр пулеметсемпе, танксене хирӗҫ пемели орудисемпе хӗҫпӑшалланнӑ, мӗн кирли вӗсен пурте пур, вӗсен полевой лазаретсем те пур. Чехословакирен Германине тарса пынӑ Судет нимеҫӗсенчен уйрӑм корпус тунӑ. Вӑл корпуса Судет облаҫне тапӑнса кӗрсе кайас сӑлтавпа тунӑ.

Ҫентаберӗн 19-мӗшӗнче Чехин ҫуҫӗр йенчи чиккинче, Аш хули ҫывӑхӗнче, Чехословаки чиккине хурал таракансем ҫине ҫӗнӗрен провокацилӗ тапӑну тунӑ, пограничниксем ҫине пулеметпа тата пӑшалпа пенӗ. Тапӑнасса—Германи территоринчен килнӗ хӗҫпӑшаллӑ банда тапӑннӑ пулнӑ. Ҫав тапӑну пирки, генлейнӑвӗҫсен представителӗ Англири Рейтер агентствин корреспондентне: „ҫакӑн пек тапӑнусем малашне тата та пулаҫҫӗ“ тесе каланӑ.

Германи правительстви Чехословаки правительствине официаллӑ ҫапла пӗлтернӗ: „генлейнавецсенчен хӑшне те пулин вӗлермелле пригӑвӑр йышӑнсан, Германире пуранакан Чехославаки граждӑнӗсем йенӗпе те ҫавнашкалах туни пулӗ“ тенӗ.

Германи фашисӗсем хыҫҫӑн Пољшӑ фашисесем Чехословакине хирӗҫ провокацилӗ кампани сарса пыраҫҫӗ. Вӗсем хайсен йенчен, Чехословакирен Чехи Силезине (Чехословаки) уйӑрса илме ыйтаҫҫӗ. Пољшӑ правителстви: „Пољшӑ Судет-Нимеҫ проблемине татса парассипе хытӑ интересленсе тӑракан государствӑсен хисепне кӗрет“ тесе официаллӑ пӗлтернӗ. Судет облаҫӗ йенӗпе Лондӑнра йышӑннӑ решенисене Пољшӑ фашисесем Чехи Силезине те сарма ыйтаҫҫӗ.

Словаки тата Закарпат Украини чиккисенче Венгри ҫарӗсене илсе килсе каплантарасси питӗ васкавлӑн пырать. Ҫавӑн пекех Венгри фашисӗсен пур хаҫачӗсем те, Чехословакине ваклама ыйтса, Чехословакине хирӗҫле кампанине питӗ хытӑ вӑйлатса йанӑ. Венгри фашисӗсем Словакине Венгри ҫумне пӗрлештерме ыйтаҫҫӗ.

(ТАСС).



Хӗрлӗ Ҫарпа Тинӗс-Ҫар флочӗн призывӗ.

ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: Сталинградри „Красный Октябрь“ савӑтри призывник-стахановӗҫсем. Сулахайран: слесарь Ароканцев, ваљцовщик Волынский, тата Власӑв йулташсем.

С. Курунин фото-ӳкерчӗкӗ (Союзфото).

ПСК(б)П Тӗпкомӗн Комиҫҫийӗ редакциленӗ, ПСК(б)П Тӗпкомӗ ырланӑ „ПСК(б)П историйӗн Кӗске курсне“ вӗренесси ҫинчен

ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗн бӳровӗ йышӑннӑ постановлени

ПСК(б)П Обкомӗ—ПСК(б)П историйӗн Кӗске курсне вӗренни коммуниссен, комсомолӗцсен тата пӗтӗм ӗҫҫыннисен революцилӗ сыхӑлӑхне хӑпартма, идейӑлӑ ҫӳлӗшне ӳстерме тата кӗрешӳ пултарулӑхне вӑйлатма пулӑшать, вӗсене ленинисӑм йалавӗ тавра, бољшевиксен партин Тӗп Комитечӗпе калӑксен ҫулпуҫӗ тата учителӗ Сталин йулташ тавра тата ҫирӗпрех пӗтӗҫтерет, тесе шутлать.

ПСК(б)П Обкомӗ райкомсене тата партин Шупашкар хула комитетне ҫак политикӑлӑ пысӑк ӗҫе тума тӗплӗн хатӗрленме хушать.

ПСК(б)П Обкомӗ ҫак паха ӗҫре вырӑнсӑр васкани, ҫухрашса йанрани тата пӑснисем ан пулччӑр тесе уйрӑмах асӑрхаттарать. Ку вӑл кампани мар,—политикӑлӑ пысӑк ответлӑ ӗҫ.

ПСК(б)П Обкомӗ парти историне вӗренес тӗлӗшпе парти организацисен руководителӗсен хӑйсен—хула комитечӗн ҫекретарӗсен, райкомсен, парткомсен ҫекретарӗсен пысӑк ӗҫ тумала, вӗсен пропагандиссем пулса ӗҫлемеле, тесе шутлать.

ПСК(б)П Обкомӗ халӗ пропагандиссен кадрӗсене хатӗрлес ӗҫе тӗплӗн тытӑнма хушать,—ПСК(б)П истори учебникӗ уйрӑм кӗнекен тухсанах ПСК(б)П историне тӗплӗн те тарӑнӑн вӗренме тытӑнмала пултӑр. Ҫавна ваљљи: а) пропагандиссен ҫеминарӗсене йӗркелӗ ӗҫлеттермеле, вӗсенче учебникӑн пӗрремӗш сыпӑкӗнчен пуҫласа вӗрентме тытӑнмала, б) пропагандӑ ӗҫне тума партин районти активӗнчен ытларах хатӗрленнисене хутшӑнтармала, в) ҫеминарсем пулакан вӑхӑт хушшинче тӗплӗн хатӗрленӗ консуљтацисем организацилемеле, парткабинетсен иљљустрацилӗ материалӗсемпе усӑ курмала.

Парти вӗренӗвӗн пӗтӗм шкулӗсемпе кружокӗсенче учебникӑн сыпӑкӗсене пичетрен тухнӑ майӗн вуласа пырассине организацилемеле. Вуланӑ вӑхӑтра иљљустрацилӗ материалсемпе усӑ курмала, вулас вӑхӑта руководителне хӑйне хатӗрлентерессине пурнӑҫа кӗртмеле. Кашни сыпӑка вуланӑ хыҫҫӑн руководителӗн калаҫу ирттермеле,—вӗренекенсем вуласа тухнӑ сыпӑкӑн идейӑлӑ тарӑн содержанине ӑнланса илччӗр.

Парти райкомӗсемпе хула комитетне пуҫламӗш парторганизацисенче парти райкомӗн представителӗн докладне лартса пухусем ирттерме хушас. ПСК(б)П райкомӗсен ҫак ыйтӑва сӳтсе-йавнӑ ҫӗре кашни коммунис хутшӑнмала тӑвас пулать тата пӗччӗн коммуниссемпе йатарласах ПСК(б)П райкомӗнче канашлу ирттермеле. Ҫак ыйтӑва сӳтсе-йавассине „Правда“ хаҫат („Правда“ хаҫатӑн ҫентаберӗн 17-мӗшӗнчи умстатйин тата „Красная Чувашия“ хаҫатпа „Чӑваш Коммунӗ“ хаҫатӑн ҫентаберӗн 20-мӗшӗнчи номерӗсем) кӑтартса панӑ тӑрӑх тумала.

ПСК(б)П Обкомӗ парти активне, коммуниссене, комсомолӗцсене, сочувствуйущисене тата ӗҫҫыннисене Сталин йулташ ҫывӑх хутшӑнса ӗҫленипе хатӗрленӗ тата марксисӑм-ленинисӑмӑн идейӑлӑ пуйанлӑхӗнчи ҫӗнӗ вклад пулса тӑракан ПСК(б)П истории Кӗске курсне тарӑнӑн вӗренме чӗнет.

ПСК(б)П ОБКОМ ҪЕКРЕТАРӖН ӖҪӖСЕНЕ ТӐВАКАНӖ А. ВОЛКАВ.

Англипе Франци Чехословакине сутаҫҫӗ

Ҫентаберӗн 18-мӗшӗнче Лондӑнра Чехословаки „ыйтӑвне мӗнле майпа татса парасси ҫинчен“ тӑракан ыйту тӑрӑх Англипе Франци правителствисен министрӗсен канашлӑвӗ пулса иртни ҫинчен пӗлтернӗччӗ. Йут ҫӗршывсенчи хаҫатсем пӗлтернӗ тӑрӑх, ҫав канашлура Англи премйер-министрӗ Чемберлен Судет-нимӗҫ облаҫне Германи ҫумне пӗрлештерессишинчен Гитлӗр ыйтнипе килӗшме хушнӑ.

Англипе Франци хушшинчи калаҫусен резуљтачӗсем ҫинчен официаллӑ пӗлтернинче ҫапла кӑтартса панӑ: „пӗтӗм тӗнчери лару-тӑру ҫинчен вӑрӑм вӑхӑт хушши сӳтсе-йавнӑ хыҫҫӑн, Англипе Франци правителствисен представителӗсем пӗтӗмӗшпех килӗшнӗ“,—тенӗ. Вӑл килӗшӳ мӗнре тӑнине пӗлтерӳре кӑтартман.

Чехословакине таткалса ваклама ҫинчен тунӑ Англипе Франци планне Лигӑ нацин хӑшпӗр деятелӗсем „Лигӑ нацие мир ӗҫӗ тӗлӗшпе предательле ӗҫ вырӑнне“ хурса пӑхаҫҫӗ.

Англири компартин хаҫачӗ—„Дейли Уоркер“ ҫапла кӑтартса парать: канашлу хыҫҫӑн „Чехословаки ыйтӑвӗ тӗлӗшпе Чемберленӑн предателле политики йӑлтах уҫҫӑн курӑнса тӑрать“. Хаҫат Чемберлен планӗсене пурнӑҫа кӗртме чӑрмантарас тата Англи правителствине Чехословакине пулӑшмала тӑвас тӗлӗшпе халех массӑлӑ кампани организацилеме чӗнет.

Франци хаҫачӗ „Ордр“ ҫапла ҫырать: Чехословаки ыйтӑвӗ тӗлӗшпе Гитлӗр требованийӗсене йышӑнни тӗнче вӑрҫин хӑрушлӑхне татах та хӑйарлатса йарать.

(ТАСС).

ЛИГӐ НАЦИ СОВЕЧӖН ПЛЕНУМӖ

Лигӑ наци Совечӗн ларӑвӗнче

Ҫентаберӗн 19-мӗшӗнче Лигӑ наци Совечӗн ларӑвӗнче Китай представителӗ Веллингтон Ку Йапонине хирӗҫ Лигӑ наци уставӗн 17-мӗш статйине халех ӗҫе кӗртме ыйтнӑ. Советран Ку Китайа укҫа-тенкӗ тӗлӗшӗнчен пулӑшасси тата Йапонине хӗҫпӑшалсемпе чӗртаварсем турттарма чарасси ҫинчен Китай тӑратнӑ требованисене ҫийӗнчех пӑхса тухма ыйтнӑ.

Совет решенийӗ тӑрӑх Йапони правителствине телеграф тӑрӑх пӗлтерсе, Китай правителстви Совет умне тӑратнӑ ыйтӑва сӳтсе-йавнӑ ҫӗрте пулма хӑйӗн представителне йама ыйтнӑ.

* * *

Лигӑ наци уставӗн 17-мӗш статйи ҫакӑн пек йӗрке палӑртса панӑ. Икӗ государствӑ хушшинче конфликт-мӗн тухсан, вӗсенчен Лигӑ членӗнче тӑраканни пӗри ҫеҫ шутланать (ку вӑл—Китай), тепӗр государствине, Лигӑ членӗнче тӑманнине (ку вӑл—Йапони) Лигӑ членӗсем ҫинче тӑракан обйазательствӑсене пӑхӑнма чӗнеҫҫӗ. Ҫак тӗллевпе Лигӑ членӗнче тӑман государствӑ патне чӗнӳ йараҫҫӗ. Ҫав чӗнсе йанӑ государствӑ Лигӑ членӗнче тӑракан государствӑна хирӗҫ вӑрҫӑла тухсан, вӑл государствӑ тӗлӗшпе 16-мӗш статйана ӗҫе кӗртеҫҫӗ, вӑл статйара агрессӑра хирӗҫ тумали ӗҫсем ҫинчен каланӑ.

(ТАСС).

Аљварес деља Вайо Лигӑ наци пленумӗнче каланӑ сӑмах

Ҫентаберӗн 19-мӗшӗнче Лигӑ наци пленумӗнче Испанин йут ҫӗршыв ӗҫӗсен министрӗ Аљварес деља Вайо пысӑк сӑмах тухса каланӑ.

Агреҫҫи асапне тӳсекен Испани Лигӑ пленумӗ умӗнче виҫҫӗмӗш хут тухса тӑрать ӗнтӗ,—тесе каланӑ вӑл.—Испани кунта, пленумра пулни—хӑйсен обйазанноҫӗ Лигӑ уставне пурнӑҫа кӗртесси пулса тӑракансене хирӗҫ анӑплакан акт пулса тӑрать, анчах вӗсем мир тӑшманӗсен ишӗлтерӳлӗ ӗҫне йалан лӑххах тӗп тӑвас тӗлӗшпе мӗнле те пулин ӗҫсем тӑвас вырӑнне Лигӑ наци часах пӗтсе ларӗ, тесе шутлаҫҫӗ.

Лигӑ наци хӑйӗн пӗтӗм историнче нихӑҫан та пленума ҫакӑн пек йӑвӑр атмосферӑра тата вӑйсӑр та тимсӗр пулса пухӑнман. Агрессӑр умӗнче кайала чакас тата агреҫҫине хакламасӑр тӑрас тактикӑ мире пурпӗрех епӗр халљи вӑхӑтра тӳссе ирттерекен канӑҫсӑр та шиклӗ сехетсем патне илсе ҫитерчӗ.

Китай халӑхне хӑйӗн кунҫулӗ аллине панӑ.

Есӗр куртӑр, никама пӑхӑнса тӑман ирӗклӗ государствӑ, ҫултаlӑк кайала ҫеҫ Лигӑ наци членӗн прависемпе усӑ курнӑ тата хамӑр ӗҫре пирӗнпе тӑтӑшах пӗрле килӗштерсе ӗҫленӗ государствӑ пирӗн хушӑран сасартӑках ҫухалчӗ (Австри ҫинчен сӑмах пырать).

„Реалистически политикӑ“ тесе калакан политикӑна пула тата вӑл мирпе саккунлӑх ҫине йӗрӗнсе пӑхнине пула Чехословакине хирӗҫ агреҫҫи тума хӑтланнисемпе пырса перӗнессине тахҫанах кӗтме пултарнӑ епӗр.

Ҫакӑн пек лару-тӑрушӑн чи пысӑк ответлӑх агрессӑрсем ҫине мар, вӗсем майлӑ тӑракансем ҫине ӳкет. Агрессӑрсем майлӑ тӑракансем вӗсем Лигӑ нацинчен хӑйсен поражениййӗсене регистрацилесе пыракан ахаљ бӳро кӑна туса хунӑ государствӑсем пулса тӑраҫҫӗ.

Ҫавӑн пек калама манӑн тулли права пур, тесе шутлатӑп епӗ.

Епӗр нимӗнле провокацирен те хӑраса ӳкмерӗмӗр, ҫавӑн пекех хӑйсене пирӗн тус тесӗ калакан, анчах, тӗрӗссипе илсен, фашисла государствӑсем майлӑ ӗҫлекен государствӑсем тӑвакан провокацисенчен те хӑраса ӳкмерӗмӗр.

Испани халӑхӗ агрессӑрсене хирӗҫ паттӑрӑн тӑрать, ҫапла тунипе мир ӗҫне самайах пысӑк пулӑшу парать.

Уйрӑм наци пулса никама пӑхӑнмасӑр пурӑнассишӗн Испани мӗн ҫӗнтеричченех кӗрешет,—тесе вайлӑн палӑртнӑ тунӑ деља Вайо.—Ҫӗршер пин испанӗцсен йунӗпе сӳсӗнлу тума йурать тесе ан шухӑшлаччӑр, вӑл испанӗцсен хӑйсен ҫӗршывне хӳтлеме ҫеҫ мар, тата Йевропӑри демократине те хӳтлеме сикҫе тӑчӗҫ.

Испани делегацийӗ Лигӑ уставӗн реформи пирки вӑл малтан каланӑ шухӑшпах йулать. Уставӑн 16-мӗш статйинче кӑтартса панӑ коллективлӑ хӑрушсӑрлӑх ҫиҫтеми Инҫет-Хевелтухӑҫӗнче, Абиҫҫинире, Австрире тата Испанире ӑнӑҫсӑр пулнӑ пирки иккӗленмели ҫук. Анчах ку—коллективлӑ хӑрушсӑрлӑх ҫиҫтемине пӗтерсе хума кирлине пӗлтермест-ха. Йалтах урӑхла, ҫав ҫиҫтемӑна ӗҫре пурнӑҫа кӗртес тата ӑна татах витӗмлӗрех тӑвас тӗлӗшпе ҫине тӑрса тимлӗн кӗрешмеле.

(ТАСС).

Англи компартин сиесӗ

Ҫентаберӗн 16-мӗшӗнче Бирмингамра (Англи) Англи компартийӗн 15-мӗш сиесӗ уҫӑлнӑ. Сӑес делегачӗсем хушшинче — ҫамрӑксем чылай.

Тӗп Комитет докладӗнче Англи компартийӗ йулашки ҫул хушшинче чылайах ӳснине палӑртнӑ.

(ТАСС).

ПАРТИ ПУРНӐҪӖ

Парти ретне ӳстерес ӗҫне райком инструкторӗсен ӗҫне вӑйлатмала

Ельӗк райкомӗ парторганизацин отчотпа суйлав пухӑвӗ иртнӗренпе парти кандидатне 20 ҫынна илнӗ, кандидатран члена 5 ҫынна куҫарнӑ.

Парти ретне колхоз производствинче чӗререн парӑнса ӗҫлекен ҫынсем кӗреҫҫӗ. Воробйов йулташ Асакассинчи „Ким" колхоз председателӗ пулса ӗҫлет. Вӑл йертсе пыракан колхоз хуҫалӑхпа политикӑллӑ пур ӗҫсемпе те районра малти ретре пырат̌. Воробйов йулташ парти ретне кӗчӗ.

Ҫавӑн пекех „Ҫӗнӗ ҫул" колхоз председателӗ Куликов йулташ та парти ретне кӗчӗ.

Районра чылай пуҫламӗш организацисем парти ретне ӳстерессипе куллен ӗҫлесе пыраҫҫӗ. Пиҫенер колхозӗнчи пуҫламӗш организаци йулашки уйӑхсенче парти кандидатне 5 ҫынна, сочувствуйушчисен ретне 1 ҫынна илнӗ. Ҫыхӑну кантурӗ ҫумӗнчи парторганизаци 3 ҫынна парти кандидатне илнӗ, 1 ҫынна кандидатран члена куҫарнӑ.

Парти ретне ӳстерес ӗҫе чӑрмантаракансем те пур. Ун пеккисенчен пӗри финанспа банк органӗсем ҫумӗнчи пуҫламӗш парторганизацин парторгӗ Йакимӑв йулташ пулат̌. Ку организацинче Давыдӑв йулташ кандидатран члена куҫма панӑ ыйтӑва 2 уйӑх, Сорокин ыйтӑвне пӗр уйӑх ҫура, Миронӑв ыйтӑвне пӗр уйӑх хушши пӑхса тухмасӑр выртнарнӑ.

Йалпо ҫумӗнчи тата Иаркуҥкӑ йалӗнчи парторганизацисем май уйӑхӗ иртнӗренпе парти ретне пӗр ҫынна та илмен. Ҫав вӑхӑтрах йалпо ҫумӗнчи организацинче пӗр пуху анчах пулнӑ.

Парти райкомӗн инструкторӗсем пуҫламӗш организацисене пырсан парти ӗҫӗн ыйтӑвӗсемпе сахалтарах ӗҫлеҫҫӗ. Колхозри стахановӗцсемпе ӗҫлемеҫҫӗ, вӗсене парти ретне кӗртессишӗн сахал ӗҫлеҫҫӗ.

Парти райкомӗн задачи—парти ретне ҫӗнӗрен илнӗ ҫынсене боԓшевикла воспитани парасси пулат̌. Хаԓхи вӑхӑтра пур коммунистсемпе сочувствуйушчисене те парти вӗренӳне йавӑҫтарнӑ. Районра парти историне вӗренмели кружок 7, политграмӑтӑна вӗренмели 4. Вӗсем пурте ӗҫлеме тытӑннӑ. Пропагандиссем ҫителӗклӗ. Ҫент̌абӗрӗн 18-мӗшӗнче парти историне ҫӗнӗ учебникпа вӗренесси ҫинчен пропагандиссемпе ҫеминар туса иртернӗ.

Чылай пропагандиссем хӑйсен ӗҫне тӑрӑшса туса пыраҫҫӗ. Райӗҫтӑвком ҫумӗнчи парти историне вӗренмели кружока Зорин йулташ йертсе пырат̌. Ку кружокра заҥатисем йӗркелӗ, уйӑхра 5 хутчен пулса пыраҫҫӗ. Кружока ҫӳрекен М. Павлӑв, М. Иванов, Широкӑв тата Давыдӑв йулташсем, заҥатисене лайӑх хатӗрленсе пырса, отличнӑ вӗренеҫҫӗ.

Ельӗк районӗнче парти ретне ӳстерес ӗҫ ҫителӗклӗ пырат̌ тесе калама ҫук ха. Парти райкомӗн ҫак ӗҫ ҫине лайӑхрах ҫаврӑнса пӑхса, парти ретне колхоз производствинчи стахановӗцсене, ҫавӑнпа пӗрлех ытти участкӑсенче вӑйа хурса ӗҫлекенсене илессине вӑйлатмала.

В. Йефремӑв.

Комсомол уйавне хатӗрленеҫҫӗ

Шупашкар районӗнчи комсомол пуҫламӗш организацисем тата сойузра тӑман ҫамрӑксем Ленинла-Сталинла комсомол 20 ҫул тултарнине пур ӗҫре те ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсемпе кӗтсе илме хатӗрленеҫҫӗ.

Алкешри комсомолӗцсем тата сойузра тӑман ҫамрӑксем хӑйсем ҫине обйазательствӑсем илчӗҫ. Иван Михайлӑв Осоавиахим членӗсене пурне те ПВХО, ГСО тата „Ворошиловский стрелок" значоксен нормисене пама пулӑшат̌. Заҥатисем йӗркелӗ пулса пыраҫҫӗ.

Есеккассинчи „Ленин" колхоз председателӗ Михайлӑв Ленинла комсомол ретне кӗчӗ. Кунта пӗтӗмпе 5 ҫамрӑка комсомола илнӗ.

Акшкӳлти механизацилӗ вӑрман пунктӗнчи стахановӗц Петр Сорокин комсомол 20 ҫул тултарнӑ йатпа пыракан социалисӑмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнса, плана 190 процент тултарса пырат̌.

Ленинла-Сталинла комсомол 20 ҫул тултарнӑ тӗле ҫамрӑк хӗрсем хушшинче ӗҫлесси те вӑйланчӗ. Лайӑх ӗҫлекен хӗрсем комсомола кӗреҫҫӗ. Карандайкассинче 4 хӗр комсомол ретне кӗнӗ. Халӗ Карандайкассинче пуҫламӗш комсомол организаци тунӑ. Шуркари комсомол организацинче малтан пӗр комсомолкӑ ҫеҫ пулнӑ. Халӗ 8 комсомолкӑ. Комсомол райкомӗн Ленинла-Сталинла комсомол 20 ҫул тултарнӑ уйава хатӗрленес ӗҫе ытти организацисенче те вӑйлатмала.

А. Ҫеменӑв.

Хӗрлӗ Ҫар призывӗ

„Пичче пекех паттӑр красноармейӗц пулатӑп"

Исакӑвӑри (Трак р.) Андрей Алексейӗв граждан вӑрҫинчен килнӗренпе вӑхӑт нумай иртрӗ. Вӑл киле таврӑнсан мирлӗ самана ырлӑхӗпе савӑнса пурӑнма тытӑннӑ. Унтанпа Николай, Ваҫилий, Ҫемен йатлӑ ывӑлӗсем ӳссе ҫитнӗ. Алексейӗв ҫамрӑк совет ҫӗршывӗ ҫине ҫӗлен калтасем килсе тапӑннине манмаст̌. Вӑл хӑй вӗсене хирӗҫ хытӑ кӗрешнӗ. Ҫапӑҫура амантса сывлӑхне начарлатнӑ. Вӑл ывӑлӗсене граждан вӑрҫи ҫинчен каласа парат̌. Телейлӗ совет ҫӗршывне лайӑх сыхласа тӑма, ҫӗршывӑн патриочӗсем пулма вӗрентет.

Андрейӑн аслӑ ывӑлӗ—Николай красноармейӗц. Вӑл Приморски 1-мӗш ҫарти кӗҫӗн командир. Вӑл нумай пулмаст̌ Ҫӗмӗрлери „Боԓшевик" савӑтра ӗҫлекен Ваҫилий йатлӑ шӑлнӗ патне ҫыру йанӑ. Николай ҫапла ҫырат̌:

„Епӗ вӑрҫӑ ҫинчен атте калани тӑрӑх ҫеҫ пӗлетӗмччӗ. Аттесем телейлӗ те савӑнӑҫлӑ пурнӑҫа ҫӗнсе илессишӗн хытӑ кӗрешнӗ. Тӑшмана совет ҫӗршывӗнчен хӑваласа йанӑ.

Йапони самурайӗсем пирӗн ҫине тапӑнма пӑхрӗҫ. Пире вӗсемпе ҫапӑҫма тиврӗ. Самурайсене епӗр манми асӑнтартӑмар. Кӗрешӳре аманса вӑхӑтлӑха сывлӑха ҫухатрӑм. Алла хӗҫпӑшал тытса ӗҫхалӑх интересне сыхлама тивӗҫлӗ пулнишӗн савӑнатӑп. Есӗ те ҫӗршыва сыхлама хатӗр тӑрасса шанатӑп."

Ывӑлӗсем маттур ӳснишӗн савӑнат̌ Алексейӗв. Ваҫилий „Боԓшевик" савӑтри стахановӗц. Ҫент̌абӗрӗн 5-мӗшӗнче комиҫҫине кӗрсе тухрӗ, ӑна Хӗрлӗ Ҫара илчӗҫ. Ҫара ӑсатас умӗн 200 тенкӗ укҫа тата чемодан парса премилерӗҫ. Ваҫилий те ҫӗршыва сыхлама тивӗҫлӗ пулнишӗн пиччӗшӗ пекех савӑнат̌. Хӗрлӗ Ҫара тухса кайнӑ чухне:

„Епӗ те пичче пекех паттӑр красноармейӗц пулма тӑрӑшӑп. Есӗр те колхоз производствинче лайӑх ӗҫлӗр,"—терӗ.

Закамский.

Епӗ—красноармейӗц

Чӑваш АССР Конституцин 99-мӗш стат̌йинче: „Пурне те тивӗҫ ҫар обйазаннӑҫӗ—саккун пулса тӑрат̌.

Рабочисемпе Хресченсен Хӗрлӗ Ҫарӗнчи ҫар службиӗ—Чӑваш АСС Республикӗн гражданӗсен хисеплӗ тивӗҫӗ пулса тӑрат̌",—тесе ҫырнӑ.

Епӗ тахҫантанпах красноармейӗц пулма ӗмӗтленсе пурӑнтӑм. Алла хӗҫпӑшал тытса тӑван ҫӗршыва сыхлама тивӗҫ илнинчен хисепли нимӗн те ҫук. Ҫент̌абӗрӗн 8-мӗшӗнче призыв комиҫҫине кӗтӗм. Комиҫҫи мана Хӗрлӗ Ҫар ретне илчӗ. Тахҫантанпа ӗмӗтленни пурнӑҫа кӗчӗ.

Пайантан епӗ — красноармейӗц. Хӗрлӗ Ҫар ретне ответлӑ вӑхатра кайатпӑр. Фашисла государствӑсем, уйрӑмӑнах Йапони пирӗн ҫине вӑрҫӑпа тухма хатӗрленет. Анчах та вӗсем пире хӑратаймаҫҫӗ, пирӗн Хӗрлӗ Ҫар вӑйлӑ. Хӗрлӗ Ҫар ҫыннисем—Ленин—Сталин партийӗ пӑхса ҫитӗнтернӗ ҫынсем, вӗсем йаланах ҫӗнтереҫҫӗ. Ҫакӑн пек пултарулӑ ҫемйене—Хӗрлӗ Ҫар ретне кӗнӗшӗн савӑнатӑп.

Б. Д. Уресметӑв.

Тӗрӗс йӗркелени кирлӗ

Республикре кӑҫал никҫанхинчен пысӑк ответлӑ стройкӑсем пыраҫҫӗ. Ҫак стройкӑсене вӑхӑтра туса ҫитересси пуринчен ытла строительствӑ материалӗсене вӑхӑтра ҫитерниинчен килет. Стройматериалсем кӑларас ӗҫре Чӑвашпромсойуз ҫиҫтеми пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрат̌. Анчах Чӑвашпромсойуз хӑйӗн ответлӑ та тивӗҫлӗ задачине йепле пурнӑҫласа пырат̌-ха?

1937 ҫулта вӑл кирпӗч тӑвас плана 68,8 процент, извӗҫ тӑвас плана 49,8 процент ҫеҫ тултарнӑ. Стройматериалсем хатӗрлекен ертелсем те иртнӗ ҫулта нумай убыткӑ тӳснӗ. Убыткӑ хисепӗ Чӑвашпромсойузӑн пӗтӗм ҫиҫтеминче 117 пин тенке йахӑн шутланат̌. Ҫав шутран Сӗнтӗрвӑрринчи стройматериалсем хатӗрлекен ертел 44 пин тенкӗ убыткӑ панӑ.

Вӑрмар районӗнчи Анаткасри „Ударник" промысла ертел председателӗнче „ӗҫленӗ" Ваҫилйӗв ертеле салатса йанӑ, ертел пурлӑхӗсене ӑҫта кирлӗ унтала ӑсатнӑ. Йулашкинчен вара ертел хӑй тӗллӗн тытӑнса тӑма пултараймаст̌ тесе Кив Вӑрмарти „Универсаль" ертелпе пӗрлештермеле тунӑ.

Пайанхи куна районсенчи партипе совет организацисем те ертел ӗҫӗсемпе интересленсе, вӗсене вӑхӑтра пулӑшу парса пырас ответлӑха хӑйсем ҫине илмен-ха. Ӑна ҫак факт та аванах кӑтартса парат̌. Нумай пулмаст̌ Чӑвашпромсойуз ҫиҫтеминче кӗрекен ертелсенче отчотпа суйлав пухӑвӗсем пулса иртрӗҫ. ЧАССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ кӑтартнӑ тӑрӑх, ҫав отчотпа суйлав пухӑвӗсем пуличчен кашни райӗҫтӑвком президиумӗн ларӑвӗнче ертел председателӗн отчотне итлемеле пулнӑ. Анчах чылай райӗҫтӑвкомсем (Сӗнтӗрвӑрри, Вӑрнар т. ыт. те) ҫавна пурнӑҫламан.

Стройматериалсене хатӗрлес ҫезон иртсе пырат̌. Анчах хӑшпӗр ертелсем ҫулталӑк планне тултарасси пысӑк хӑрушлӑх умӗнче. Ҫент̌абӗрӗн 1-мӗшне ҫулталӑк планне пӗтӗм ҫиҫтемипе: чӗр кирпӗч тӑвассипе 90,83 процент, хӗртнӗ кирпӗч тӑвассипе 47 процент ҫеҫ тултарнӑ. Йапӑх ӗҫлени пӗр йенчен вутӑ сахал хатӗрленинчен килет. Вутӑ тӑратма пулнӑ организацисем вутӑ тӑратас тӗлӗшпе ҫав тери начар ӗҫлеҫҫӗ. Акӑ Уплерти „Труд" ертеле (Сӗнтӗрвӑрри р.) догӑвӑр тӑрӑх Кайри Шӗнерпуҫӗнчи „Древообделочник" ертел 500 кубла метр вутӑ памала. Анчах вӑл пӗр кубла метр та паман.

Плана тултарманнин тепӗр сӑлтавӗ — производствӑра ӗҫлекенсен йышӗ ҫителӗксӗррине, Сӗнтӗрвӑрринчи „Стройматериал" ертелре план тӑрӑх 70 ҫын ӗҫлемеле пулсан, 38 ҫын ҫеҫ ӗҫлеҫҫӗ. Ҫак ҫитменлӗхсем пулнӑ пирки ӗнтӗ Чӑвашпромсойуз ҫиҫтеминчи стройматериалсем хатӗрлекен 13 ертелтен ҫулталӑк планне чӗр кирпӗч тӑвассине 10 ертел кӑна тултарнӑ.

Строительствӑ планне ӑнӑҫлӑ, срукра тултарас пулсан, паллах, пайанхи пек ӗҫлемеле мар. Ертелсенче социалисӑмлӑ ӑмӑртупа стахановла йухӑма сарса йамала.

В. Ивлӗв.

Чӑвашпромсойуз инструкторӗ.

ПСК(б)П историне вӗренмели кружок

ШӐХАСАН. Райпотребсойуз ҫумӗнчи коммуниссемпе комсомолӗцсем ҫент̌абӗрӗн 16-мӗшӗнче ПСК(б)П историне вӗренесси ҫинчен ПСК(б)П Мускав хула комитечӗн пленумӗ 1938 ҫулхи ҫент̌абӗрӗн 11-мӗшӗнче йышӑннӑ постановленине сӳтсе-йаврӗҫ. Райсойуз ҫумӗнчи коммуниссемпе комсомолӗцсем хушшинче „ПСК(б)П историйӗн Кӗске курсне" вӗренме кружок организацилерӗмӗр. Кружокӑн заҥатийӗсем кашни уйӑхрах 3 хутчен пулса иртеҫҫӗ. Кружокра 15 ҫын вӗренмеле, ӑна А. Ваҫилйӗв коммунис йертсе пырат̌.

Ҫавӑн пекех партире тӑман ҫамрӑксем хушшинче те кружок организациленӗ.

Дм. Иванов.

Ленинла-Сталинла комсомол XX ҫул тултарнӑ тӗле

Ленинла-Сталинла комсомол XX ҫул тултарнӑ йубилей тӗлне пирӗн ҫӗршыври фотона йуратакан ҫамрӑк пионерсем „Пионер кунӗ" йатлӑ чаплӑ фотоаԓбом хатӗрлеҫҫӗ.

Фотона йуратакан ҫамрӑк пионерсен кунӗнче—ийулӗн 5-мӗшӗнче—пирӗн ачасемшӗн мӗн чи лайӑх та интереснӑ пулнӑ,—ҫавсене пурне те фотоаԓбом ҫине ӳкерне.

Чӑваш республикӗнчен вӑл аԓбом ҫине Шупашкарти ачасен техникӑллӑ станци ӳкернӗ виҫӗ фотоӳкерчӗк кӗртеҫҫӗ. Вӗсенчен иккӗшне Николай Никифӑрӑвпа Владислав Шипунов хӑйсем тунӑ „лейкӑ" йышши фотоаппаратпа ӳкернӗ, теприне—Борис Ваҫилйӗв „Турист" фотоаппаратпа ӳкернӗ.

Аԓбома ачасен Шверник йачӗпе тӑракан тӗп техникӑллӑ станципе Сойузфото пӗрле кӑлараҫҫӗ.

Лукинский.

Кийӗв уйрӑм Ҫар округӗнчи Н чаҫӗн тактикӑллӑ вӗренӗвӗсем

ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: Танк-амфибисем шыва кӗрсе кайас умӗн.

М. Рыжак фото-ӳкерчӗкӗ (Сойузфото).

А. Рамин

Хаҥкоу патӗнчи ҫапӑҫусем

Йапонӗцсем Ҫуйчжоуна тытса илнӗ хыҫҫӑн, Йапони командованийӗ Уханҥ районӗ ҫине черетлӗ наступлени тума палӑртнӑ. Ҫуйчжоу хулине тытса илессишӗн ҫапӑҫнӑ ҫӗрте йапонӗцсен, вилнисемпе аманнисене пӗрле илсен, темиҫе вуншар пин салтак пӗтнӗ.

* * *

Йапонӗцсем наступлени туса пыракан Уханҥ районӗ виҫӗ хуларан тӑрат̌: Хаҥкоу, Хаҥйан тата Учан. Виҫӗ хули те Йанцзы йуханшывӗ хӗрринче: Учан — унӑн кӑнтӑр ҫыранӗнче, Хаҥкоупа Хаҥйан — ҫурҫӗр ҫыранӗнче. Хаҥкоу тата Хаҥйан хулисене Хан йатлӑ йуханшыв уйӑрса тӑрат̌.

Уханҥ районӗнче 1.200 пин ҫын ытла пурӑнат̌, вӗсенчен Хаҥкоу хулинче 800 пин ҫын ытла. Политикӑ, економикӑ тата ҫар тӗлӗшӗнчен Уханҥ районӗнче малти вырӑнта Хаҥкоу хули шутланат̌. Унта пурӑнакан 800.000 халӑхран 4 пинӗ—йут ҫӗршыв ҫыннисем.

Виҫӗ хули те Бейпин—Хаҥкоу чукунҫулӗсем пӗрлешнӗ ҫӗрте тата Йанцзы йуханшыв патӗнче вырнаҫнӑ. Кунта пысӑк пӑрахутсене ҫӳреме вырӑн йурӑхлӑ. Кӑнтӑр Китайпа ку района Кантон—Хаҥкоу чукунҫулӗ ҫыхӑнтарса тӑрат̌. Вӑл чукунҫул Гонконг урлӑ Китайа хӗҫпӑшал хатӗрӗсем илсе пырас йенчен чылай пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрат̌.

Уханҥ районӗнчи вырӑн условисем Китай ҫарӗсемшӗн кӑштах усӑллӑ пулса тӑраҫҫӗ. Вӑл хулан ҫурҫӗр, хӗвелтухӑҫ тата кӑнтӑр пайӗсенче сӑртсем пит нумай. Ҫакӑ вӑл вӑрҫӑ ӗҫӗсем тӗлӗшпе Йапони ҫарӗсене самайах ӑвӑрлатат̌.

Економикӑ тӗлӗшӗнчен Уханҥ районӗ Китайра паллӑ вырӑн йышӑнат̌. Ку вӑл йут ҫӗршывсемпе тӑвакан суту-илӳ, унтан та ытларах шалти суту-илӳ, оборотӗнчен те курӑнат̌. 1936 ҫулта Китайӑн пӗтӗм суту-илӳ оборотӗнчен 15 проценчӗ—Хаҥкоу хули ҫине тивнӗ. Хаҥкоу порчӗ 1936 ҫулта импӑртпа експӑрт тӗлӗшӗнчен Шанхай хыҫҫӑн иккӗмӗш вырӑн йышӑннӑ.

Иртнӗ вӑхӑтра хӑйӗн промышлӗннӑҫ тӗлӗшӗпе Уханҥ районӗ 5-мӗш вырӑн йышӑнса тӑнӑ. Вӑл районта пир-авӑр ӗҫӗпе ӗҫлекен пысӑк предприйатисем тата металлурги савӑчӗсем темиҫе пулнӑ. Пир-авӑр промышлӗннӑҫӗ тӗлӗшпе Хаҥкоу Китайра виҫҫӗмӗш центр шутланат̌.

Уханҥ районӗнчи йут ҫӗршыв предприйатийӗсенчен чи малтан Англи аллинче тӑракан ҫӗрмамӑк тасатакан тата пресс тӑвакан пысӑк савӑтсене палӑртмала. Кунта Англи йенчен капитал хывнине илсен, вӑл 16 мӗлйун доллартан та иртет. Хаҥкоура Англин пысӑк концеҫҫийӗ шутланакан „йатарласа 3-мӗш район" тунӑ.

Вӑрҫӑ пуҫланиччен умӗн Хаҥкоура Англин 3 банк тата 14 суту-илӳпе промышлӗннӑҫ компанисем пулнӑ. Вӗсем нумай предприйатисене пӗрлештерсе тӑраҫҫӗ. Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен 2 банк, авиаци компанийӗ пӗрре тата миссионерла шкулсем темиҫе пулнӑ. Франци—2 банк тата промышлӗннӑҫ компани пӗрре пулнӑ.

Ҫакӑн пек ӗнтӗ кӗскен Уханҥ районӗ ҫинчен калакан тӗслӗхсем.

* * *

Хаҥкоу ҫине наступлени тума пуҫланӑ чухне Йапонин генераԓнӑй штабӗ ҫакнӑ шута илнӗ: йапонӗцсем Ҫуйчжоуна тытса илни Китай ҫарӗсене мораԓ тӗлӗшӗнчен нимӗн чухлӗ те пӑсса йарайман. Китай ҫарӗсем нумай ҫухатусем тумасӑрах ҫӗнӗ позицисем ҫине куҫма пултарнӑ. Вӑрҫӑн малашлӑхӗсем ҫинчен хак парса, Йапони командованийӗ:—Китай ҫарне ҫапса хуҫмасӑр вӑрҫӑна ӑнӑҫлӑн вӗҫне ҫитересси ҫинчен сӑмах та пулма пултараймаст̌, тесе уҫҫӑнах йышӑннӑ.

Тӗрӗссипе вӑл ҫакна пӗлтерет: Йапони войеншчини, Китай ҫарӗн хирӗҫ тӑрас вӑйне тутанса пӑхса, унӑн ӳснӗ хӑватӗнчен хыттӑн шикленет, мӗншӗн тесен вӑл хӑват Йапони хӗҫпӑшалӗсене ҫӗмӗрсе тӑмма пултарат̌.

Ҫапла вара, Хаҥкоу ҫине тунӑ наступленин чи кирлӗ сӑлтавӗсенчен пӗри вӑл—Китай ҫарӗн вӑйӗнчен хӑрани, ӑна пур майсемпе тата мӗнпур вӑйпа дезорганизацилеме хӑтланни пулса тӑрат̌. Калас пулат̌, Китай ҫарне вӑрӑм вӑхӑта стройран кӑлармала тӑвасси ҫинчен тата ӑна ҫывӑх вӑхӑтра ҫӗмӗрсе тӑкасси ҫинчен Йапони войеншчини хаԓхи вӑхӑтра шутламаст̌ те ӗнтӗ.

Хаҥкоу патӗнче вӑрҫӑ ӗҫӗсем ийуҥ уйӑхӗн пуҫламӗшӗнче пуҫланнӑ. Унтанпа виҫӗ уйӑх иртрӗ ӗнтӗ, анчах та Китай ҫарӗсем Хаҥкоу хулине малтанхи пекех ҫирӗппӗн хӳтӗлесе тӑраҫҫӗ. Йапонин Китайри тем тери пысӑк ҫарӗнчен чылайӗшӗ Хаҥкоу патӗнче вӑрҫаҫҫӗ. Апла пулин те хулана тытса илме хӑтланни пӗр майах ӑнӑҫсӑр пулса пырат̌. Китай ҫарӗсем Уханҥ районне ӑнӑҫлӑн хӳтӗлени вӑл, пӗр йенчен, оборонӑна лайӑх организациленинчен, тепӗр йенчен, Китай ҫарӗ оперативлӑ-тактикӑллӑ прийомсене лайӑхлатнинчен килет.

Уханҥ районӗн оборонӑ планне чылай малтан палӑртса тӗплӗн сӳтсе-йавса тунӑ, вӑл планра вӑрҫӑ тӗлӗшпе тумали ӗҫсене ҫеҫ мар шута илнӗ, кунсӑр пуҫне унта вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче туса пымали массӑллӑ-политикӑллӑ ӗҫсене те шута илнӗ. Тылпа малти позицисем пӗр план тӑрӑх тата пӗрлӗхлӗ руководствӑ тӑрӑх вӑрҫаҫҫӗ пулсан, паллах, резуԓтатсем пачах урӑхла пулаҫҫӗ. Китайри ытти чылай районсенче ун пек пулман.

Кун ҫумне Китай ҫарӗсен ӳснӗ активлӑхне хушмала. Китайӗцсем хаԓхи вӑхӑтра оборонӑра тӑрса ҫеҫ вӑрҫмаҫҫӗ, вӗсем тата час-часах контрнаступлени тӑваҫҫӗ, тӑшмана, унӑн оперативлӑ-тактикӑллӑ прийомӗсемпе усӑ курсах, ҫӗмӗрсе тӑкаҫҫӗ.

Хаԓхи вӑхӑтра Китайри вӑрҫӑ ӗҫӗсем тӗпрен илсен Йанцзы йуханшывӗ тӑрӑхӗнче пыраҫҫӗ. Августӑн йулашки кунӗсенче Йапони командованийӗ пӗр вӑхӑтрах ултӑ колоннӑпа Хаҥкоу ҫине наступлени тума йышӑннӑ. Тӗп ҫарсем Йанцзы йуханшывӗн кӑнтӑр тата ҫурҫӗр ҫыранӗсем тӑрӑхӗпе наступлени туса пыраҫҫӗ, кунпа пӗрлех ҫарсен пӗр пайне Наҥчан хули урлӑ кӑнтӑр йенчен Хаҥкоу хулине инҫетрен ҫаврӑрса илме йанӑ. Йулашки кунсенче Жуйчан районӗнче (Йанцзы йуханшывӗн кӑнтӑр ҫыранӗ) йапонӗцсене хыттӑн ҫӗмӗрсе тӑкнӑ, унта Йапони ҫарӗсем Китай оборонине татса кӗме хӑтланнӑ. Йанцзы йуханшывӗн кӑнтӑр ҫыранӗнче йапонӗцсем пӗр кун хушшинче 500—800 метр малала кайаҫҫӗ пулсан, вӑл йуханшывӑн ҫурҫӗр ҫыранӗнче наступлени тӑвасси татах йерипен пулса пырат̌.

Ҫакна кусран йама йурамаст̌, Йапони командованийӗ Китай позицисем ҫине пӗр вӑхӑтра: сывлӑшран, ҫӗр ҫинчен тата шыв ҫинчен тапӑнса пырат̌. Кунсӑр пуҫне, йулашки вӑхӑтра йапонӗцсем вӗлерекен газсемпе те усӑ кураҫҫӗ. Дзйанран ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫ йенчи районта (Йанцзы йуханшывӗн кӑнтӑр ҫыранӗ) ҫент̌абӗрӗн 7-мӗшӗнче йапонӗцсем темиҫе сехет хушши артиллерирен химилӗ снарйадсем кӑлара-кӑлара йанӑ.

Хаҥкоу районӗнчи вӑрҫӑ ӗҫӗсемшӗн ҫак факт паллӑ пулса тӑрат̌: Йапони ҫарӗ, вӑрҫӑ ӗҫӗнчи мӗн пур ҫӗнӗ средствӑсемпе усӑ курат̌ пулин те, анчах такӑлӑ ҫитӗнӳсем тума пултараймаст̌ кӑна мар, вӑл тата фронтӑн хӑшпӗр участкисенче час-часах поражениссем тӳсет.

Китай правительстви, вӑрҫӑ вӑрӑма кайнине шута илсе, Йапони захватчикӗсене хирӗҫ малашне те хыттӑн кӗрешсе пыма чылай ӗҫсем тума йышӑннӑ. Хаҥкоура Китай аллинче шутланакан вӑрҫӑ тӗлӗшӗнчен питех те кирлӗ чи пысӑк предприйатисене хаԓхи вӑхӑтра урӑх вырӑнсене, шаларах куҫарнӑ. Ку утӑма Китай правительствин ҫакӑншӑн тумала пулнӑ: Йапони авиацийӗ, Хаҥкоу ҫине пырса пӗрмайах бомбӑсем пӑрахса, хапрӑксавӑт предприйатисене сахал мар сийен кӳрет. Ҫакна палӑртмала, ҫав предприйатисене Хаҥкоуран урӑх вырӑна куҫарассине пит те пӗлсе тунӑ, вӑл хапрӑксемпе савӑтсем тулли нагрузкӑпах ӗҫлеҫҫӗ.

Уханҥ районӗ економикӑ йенчен Китайшӑн пысӑк вырӑн йышӑнат̌. Анчах правительствӑ чылай ӗҫсем тума йышӑннӑ май, вӑл района сухатни Китай ҫӗршывӗн економикӑллӑ пурнӑҫӗнче палӑрсах кайман пулӗччӗ. Сӑмахран, йапонӗцсем Хаҥкоуна тытса илсен те (вӑл пуласси хаԓ шанчӑклах мар-ха), Китай правительстви аллинче Уханҥ ҫывӑхӗнчи провинцисенче вӗҫӗмсӗр нумай пуйанлӑхсем йулаҫҫӗ, вӗсем промышлӗннӑҫа тата ҫара пур тӗрлӗ материаллӑ средствӑсем те ҫителӗклӗн парса тӑма пултармала.

* * *

Ҫурҫӗр Китайра вӑрҫӑ ӗҫӗсем, тӗпрен илсен, Шаҥси провинцин кӑнтӑр пайӗнче. Хуанхе йуханшывӗ патӗнче пулса пыраҫҫӗ. Кунта Йапони чаҫӗсем ҫав шыв урлӑ каҫма пӗр хутчен кӑна мар хӑтланса пӑхнӑ. Вӗсем ун урлӑ каҫса, кӑнтӑр ҫыранӗ йенче тӑракан Китай чаҫӗсем ҫине тапӑнма хӑтланаҫҫӗ. Анчах шыв урлӑ каҫмали тӗлсене китайӗцсем малтанхи пекех вӑйлӑн хӳтӗлеҫҫӗ. Йапонӗцсен хӑтланӑвӗсем вӗсемшӗн пысӑк ҫухатусем тунипе пӗтсе пыраҫҫӗ.

Пӗтӗмӗшпе илсен ҫакӑн пек ӗнтӗ фронтсенчи лару-тӑру. Анчах та Йапони оккупанчӗсен тылӗнче партизансем вӑрҫине шута илмесен, Китайри вӑрҫӑ ӗҫӗсене пӗлни ҫителӗксӗр пулнӑ пулӗччӗ. Хаԓхи вӑхӑта Китай партизанӗсем хӑватлӑ вӑй пулса тӑраҫҫӗ, вӗсем йапонӗцсем кӗрешсе илнӗ территорисене кайала тытса илессипе хӑратса тӑраҫҫӗ, ку хӑрушлӑх вӑл пуринчен ытларах ҫурҫӗрте курӑнса тӑрат̌. Сӑмахран, Хебей провинцийӗн (Ҫурҫӗр Китай) ҫурри партизансен аллинче шутланат̌.

Партизансем Йапони ҫарӗсен тылӗнче пӗрмайах выступленисем тӑваҫҫӗ. Вӗсем йапонӗцсене ҫынсем тата ытти тӗлӗшпе те пит пысӑк ҫухатусем кӳреҫҫӗ. Ҫак вӑл фронтсенчи вӑрҫӑ ӗҫӗсенче палӑрмасӑр тӑма пултараймаст̌. Йапони командованийӗ партизансене хирӗҫ кӗрешме хӑйӗн вӑйӗсен чылай пайне каратӗлни отрйадсем туса йани те ҫакӑнтанах килет. Ҫав каратӗлни отрйадсен ӗҫӗсем питех те куԓанмала вара.

Китай партизанӗсен халӑхпа уйӑрӑлми ҫыхӑнса тӑракан мӗлйунлӑ ҫарне пӗтерсе тӑкма май ҫук. Кунтан та ытларах, партизанла йухӑмӑн хумӗ кашни кунах сарӑлса пырат̌. Час-часах ҫакӑн пек пулат̌: Йапони ҫарӗсем халӑхсем пурӑнакан пӗр-пӗр пункта ирхине йышӑннӑ пулсан, каҫхине ун ҫине партизансем тапӑнаҫҫӗ. Вӗсем пӗр 6—7 сехет хушшинчех организацилеме ӗлкӗреҫҫӗ.

Йапони войеншчини Китайри фронтсенчи ӗҫӗ ӑнӑҫусӑр пулса пынине лайӑх кӑтартса паракани вӑл—йулашки вӑхӑтра вӑрҫӑ ӗҫӗсем пыракан районсене Йапонирен ҫарсем илсе пыни пулса тӑрат̌.

Фронтсенчи ӑвӑрлӑхсем Йапони хуҫалӑхӗ тӗртӗнсе ҫитнипе пӗрлешни Йапонин Китайри аван̌турине пӗтесси патнех илсе пыраҫҫӗ.

ССРС Çĕрĕç Халăх Комиссариатĕнче

Çĕре çемçетмели вырăнти йапаласемпе усă курасси çинчен

Тĕрĕсленĕ тăрăх çакна палăртнă: кăçал колхозсенче тислĕкпе усă курассине йапăх организациленĕ. Çавна май, ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ нумай пулмаст̆ йатарласа приказ кăларнă. Çав приказра органикăлă удобренисене, уйрăмах, тислĕк пухас тата вĕсемпе усă курас тĕлĕшпе тумали ĕçсене кăтартса панă.

Колхозниксем хура тăпраллă мар вырăнта хăйсем усракан выļăхсенчен пухнă тислĕке колхоз уйхирĕсем ваļļи 4 тоннă таран, вăрманлă вырăнта—3 тоннă таран, хирлĕ вырăнта—2 тоннă таран паха тислĕк панă пулсан, вĕсене кашни тоннă тислĕкшĕн 0,5—1 ĕçкунĕ шутласа памала. Кăтартнă хисепрен ытларах панă кашни тоннă тислĕкшĕн 1—2 ĕçкунĕ шутласа пама кирлĕ.

Тислĕк парас тата тислĕк панăшăн ĕçкунĕ шутласа парас нормăна кашни колхозра вырăнти условисене кура уйрăмăн палăртмала.

Уйхир бригадиссене, унăн çумне çирĕплетнĕ хуçалăхсенчен кашни 20—30 тоннă уйа турттарса кăларнă тислĕкшĕн пĕрер ĕçкунĕ памала. Колхозра планран иртерсе хатĕрленĕ кашни 20—30 тоннă компостшăн 2—3 ĕçкунĕ шутласа параççĕ.

Торф хатĕрлесе, типĕтсе выļăхсен айне сарма тата компост тума турттарса кăларнă кашни 100 тоннăшăн бригадăна 10—15 ĕçкунĕ параççĕ. Çав ĕçкунĕсене бригадăра çав ĕçре ĕçленĕ колхозниксене валеççе памала.

Скотниксемпе коņухсем планран иртерсе панă кашни тоннă тислĕкшĕн вĕсене 0,5 ĕçкунĕ шутласа памала. Колхозсене, колхозниксем хăйсен çемйи вăйĕпе пĕр тоннă фекали йе компост хатĕрлесе парсан, вĕсене 2—3 ĕçкунĕ шутласа пама хушнă.

Фекали турттарас тата унтан компост хатĕрлес çĕрте ĕçлекен колхозниксене ытти ĕçсенчен 2—3 хут ытларах ĕçкунĕ шутласа парас пулат̆.

Кашни пĕр центнĕр кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса типĕтнĕ хыççăн уйа кăларсан, вара колхозниксене 2 ĕçкунĕнчен пуçласа 4 ĕçкунĕ таран, кашни пĕр центнĕр йăвăç йе улăм кĕлĕшĕн 1—2 ĕçкунĕ памала.

Тăрăшса ĕçленин резуļтачĕсем

ЕЛĔК. Çент̆абĕрĕн 15-мĕшĕнче Тавăт колхозникĕсем пур куļтурăсене те çапса пуçтарчĕç. Колхоз агротехникăлă мероприйатисене тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пынипе тырпул вăйлă пулчĕ. Кашни гектар çинчен 23 центнĕр ыраш туса илнĕ. Виççĕмĕш бригадăн гектартан 18 центнĕр урпа тухрĕ. Кăçалхи йалхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлессишĕн пурте пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлерĕç. Ăмăртура пĕрремĕшпе иккĕмĕш бригадăри колхозниксем мала тухса пычĕç. Колхозниксем ĕçе чĕререн йуратса тăваççĕ, кашни колхозник ĕçе тĕплĕн тата вăхăтра тăвассишĕн тăрăшса ĕçлет.

Çавăнпа та Тавăт колхозĕнче пĕр колхозник те ĕçе тухмасăр йе ĕçе тĕплĕн тумасăр дисциплинăна пăсни пулман. Ĕçре тăрăшса ĕçленине пула колхозниксем ĕçкунĕ тăрăх илекен тупăш та пысăк. Гордейĕв стахановеç пĕр пĕччен ĕçлесе 120 пăт тырă, 200 тенкĕ укçа тата выļăх апачĕ илет.

Кăçал пирĕн колхозра пысăк строитĕлствăсем пулчĕç. 60 лаша вырнаçмалăх вите, 12 пиņ пăт ытларах тырă вырнаçмалăх склад туса лартнă. Çак çуртсене лартма 100 пиņ тенкĕ таран укçа тухнă.

Соловйов.

Кĕрхи çĕртме тăвас ĕç

Çент̆абĕрĕн 18-мĕшĕнче, Кÿкеçре, Шупашкар районĕнчи колхоз председателĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу районра кĕрхи çĕртме тăвас ĕç мĕнле пыни çинчен тĕплĕн сÿтсе-йаврĕ. Канашлу кĕрхи çĕртме тăвасси вăрахăн пырат̆, тесе палăртрĕ. Кунпа пĕрлех кĕрхи çĕртме тăвас ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме татăклă мерăсем палăртса хăварчĕ, кĕрхи çĕртмене окт̆абĕрĕн 1-мĕшчен туса пĕтерме йышăнчĕ.

Шупашкар районĕнчи уйрăм колхозсем кĕрхи çĕртме тăвассипе аван ĕçлерĕç. „Память Ленина“, Молотăв йачĕпе тăракан колхозсем кĕрхи çĕртме туса пĕтерчĕç. „11 лет Октября“ колхоз та çак кунсенчех кĕрхи çĕртме туса пĕтерет. „Чăваш Коммунĕ“ колхозăн план тăрăх 100 гектар сухаламала пулнă пулсан, 80 гектар сухаланă.

Колхозсенче кĕрхи çĕртмене 20 сантиметр, уйрăм вырăнсенче 18 сантиметр тарăнăш сухалаççĕ.

Йегорĕв.

Йединоличниксенчен налог укçине пухса пĕтермен

Виççĕмĕш квартăл вĕçне тухиччен 10 кун та йулмарĕ. Анчах Упи йалсовечĕ (Трак р.) çент̆абĕрĕн 10-мĕшне илсен плана 67 процент кăна тултарнă. Йединоличниксем йенĕпе ĕç татах та йапăх пырат̆ (плана 14 процент анчах тултарнă). Пур тÿлевсене те пĕрле илсен иртнĕ çулта пухмалли укçана та пиņ тенке йахăн пухса пĕтермен.

Займ çырăнасси ăнăçлă иртрĕ. Анчах укçа пухасси питĕ йапах пырат̆. Плана 13 процент çеç тултарнă. Финанс çекци членĕсем тата займ уполномоченнăйĕ Васильйĕв займ укçине пухмаççĕ.

А. Киçеļов.

Халăх переписне ирттерме хатĕрленеççĕ

ЙĔПРЕÇ. 1939 çулхи халăх переписне хатĕрленсе ирттермели плана çент̆абĕрĕн 20-мĕшĕнче райĕçтăвком президиумĕнче пăхса тухса çирĕплетрĕç.

Планра уйрăмăнах переписе ирттерессипе ĕçлекен кадрсене политикă тĕлĕшĕнчен шанчăклă çынсенчен суйласа илесси çине, халăх хушшинче куļтурăлă-массăлă ĕçе лайăх туса пырасси çине ытларах çавăрăнса пăхнă. Переписе хатĕрленсе ирттерессипе ĕçлеме çирĕплетнĕ кадрсем пĕтĕмпех парти членĕсемпе кандидачĕсем, комсомолеçсем, ССРС, РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлав кампани вăхăтĕнче ÿссе çитĕннĕ кадрсем. Вĕсем 438 çын, пурте пропагандиссем, агитатăрсем.

Районра перепис ĕçне райплан председателĕ, парти членĕ Скворцов йулташ йертсе пырат̆. Йĕпреç участкинче инструктăр пулса парти кандидачĕ Козлов йулташ ĕçлет. Вăл РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕ вăхăтĕнче округри суйлав комиççи çекретарĕ пулнă. Епеç участкинчи инструктăр — туллимар вăтам шкул директăрĕ Алексейĕв йулташ. Вăл 1937 çулхи халăх переписĕнче те активлăн хутшăнса ĕçленĕ. Пултарулă агитатăр, участкăри суйлав комиççи председателĕ пулса ĕçленĕ.

Вырăс Тимеш йалсоветĕнче счотчик пулса парти членĕ Григорйĕв йулташ ĕçлемеле, вăл вăрман пункчĕн начаļникĕ. Вĕсем пурте переписе хутшăнса ĕçлесшĕн. Районри перепис ĕçĕн руководителĕ Пешко йулташ çент̆абĕрĕн 16 мĕшĕнче Хыркасси йалне счотчик тупма кайнă. Унта Мйасниковăпа Воронков учителĕсем счотчик пулса ĕçлеме килĕшÿ панă.

Инструктăрсемпе счотчик-контроļорсем переписе кăтартулă ирттерессипе хăйсем çине татăклă обйазательствăсем илнĕ, социалисăмлă ăмăртăва тухнă. Перепис пайĕсен заведуйушчисем пĕр-пĕринпе социалисăмлă ăмăрту догăвăрĕсем тунă.

— Халăх переписне хутшăнса ĕçлесси маншăн ответлă та чыслă ĕç. Епĕ хам çине переписе отличнο ирттерме обйазательствă илетĕп. Уйрăмăнах массăлă-ăнлантарулă ĕç çине ытларах вăй хуратăп,—тет Дмитрийĕв счотчик.

План тăрăх окт̆абĕр уйăхĕнче перепис пай заведуйушчисен заместителĕсен, инструктăрсен, счотчиксен инструктивлă канашлăвĕсем пулса иртмеле. Окт̆абĕрĕн 1—3-мĕшĕсенче перепис пай заведуйушчисен заместителĕсен инструктивлă канашлăвĕ пулса иртет.

Декабĕрĕн 1—3-мĕшĕсенче инструктăр-контроļорсен канашлăвĕ пулат̆. Канашлăва перепис пайĕсен заведуйушчисем ирттереççĕ. Вăл канашлусенче переписе ирттерес ĕçĕн техникипе задачисем çинчен сÿтсе-йаваççĕ.

Халăх хушшинче массăлă практикăлă ĕçсем туса ирттерме палăртнă. Окт̆абĕрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа промышленнăçлă предприйатисемпе учреждениссенче рабочисемпе служащисен, инженерла-техникла работниксен пухăвĕсем пулса иртмеле. Йалсоветсемпе колхозсенче колхозниксемпе колхозницăсен тата йединоличниксен пухăвĕсене, çент̆абĕрĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа ирттермеле. Вăл пухусенче 1939 çулхи халăх переписĕ çинчен сÿтсе йаваççĕ.

Окт̆абĕрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа йанварĕн 1-мĕшчен перепис ыйтăвĕпе 5 хутран кайа мар лекци ирттермеле.

Районри клуб çумĕнче çент̆абĕрĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа перепис кĕтесĕ ĕçлеме тытăнчĕ. Çавăн пекех кашни йалсоветра, колхозра перепис кĕтесĕсем пулаççĕ. Кунсăр пуçне районри клубра перепис ыйтăвĕпе окт̆абĕр уйăхĕнче пĕр лекци, нойабĕр уйăхĕнче тепĕр лекци ирттермеле.

Кашни йалсовет çумĕнчех пулăшу комиççисем организациленĕ. Вăл комиççисенче халăха перепис çинчен ăнлантарса парассипе йатарласа уйăрнă докладчиксем, агитатăрсем, калаçу ирттерекенсем пулаççĕ. Вĕсемпе çент̆абĕрĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа окт̆абĕрĕн 1-мĕшчен канашлусем ирттереççĕ. Кунсăр пуçне ПСК(б)П райкомĕ переписпе ĕçлеме РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕ вăхăтĕнче ÿссе çитĕннĕ пропагандиссемпе агитатăрсене 438 çын уйăрса хунă.

ПСÇЛКС райкомĕ перепис ыйтăвĕпе окт̆абĕрĕн 10-мĕшĕнче комитет çекретарĕсемпе комсоргсен канашлăвне ирттерет. Окт̆абĕрĕн 22-мĕшĕнчен пуçласа 25-мĕшчен çак ыйту тăрăх пур комсомол организацисенче те комсомолеçсен пухăвĕсем пулса иртеççĕ.

Дм. Михайлăв.
Гл. Марушев.

Трахпункт ваļļи çурт памаççĕ

Оринин йалсовечĕ (Тутаркас районĕ) трахомпа кĕрешес ĕçе хакламаст̆. Йала трахçестра килни уйăх ытла ĕнтĕ. Йалсовечĕ трахпункт ваļļи халиччен те пĕр пÿлĕм уйăрса памаст̆.

Трахçестра Албутăвă йулташ йаланах йалсоветне пырса трахпункт ваļļи пÿлĕм тупса пама ыйтат̆. Йалсовет председателĕ Репин йулташ: „Часах тупса паратпăр“ тесе лăплантарса ларат̆.

Трахпункт ваļļи çутă та лайăх пÿлĕм халех тупса памала.

И. Соловйов.

Классем тата учителсем çитмеççĕ

Çĕнĕ Пăвари (Йелчĕк р-нĕ) вăтам шкул çĕнĕ вĕренÿ çулне çителĕксĕр хатĕрленнипе кĕтсе илнĕ. Классем çитмеççĕ. Çырмалли хутсемпе кăранташсем çителĕклĕ мар. Физикăпа истори предмечĕсене вĕрентме учителсем çук. Шкула пурĕ 536 ача вĕренме çÿремеле, анчах вĕсенчен чылайĕшĕ çÿремеççĕ-ха.

Çак çитменлĕхсене районри çутĕç пайĕн пуçлăхĕ Макарăв та аван пĕлсе тăрат̆. Анчах вăл шкула пулăшни çук-ха.

В. Наумăв.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Шупашкар станци строителствинчи каменщик—стахановеç И. Н Потапăв вокзал никĕсне хывнă çĕрте.

Цыганов фото-ÿкерчĕкĕ

Пĕр вырăнтах тăма сăлтавсем çук

Канаш — Шупашкар чукунçулĕнчи строителствинчи стахановла çирĕмкунлăхăн малтанхи вунă кунĕ иртрĕ. Чукунçул строителствинче ĕçлекен рабочисем, колхозниксем стахановла çирĕмкунлăха хутшăнса ĕçлесе чылай çитĕнÿсем турĕç. Пĕрремĕш участкăри каменщиксем: И. Кузнецов, Живулин йулташсем, лини хывнă çĕрте ĕçлекен Колбасăв тата çĕр чавнă çĕрте ĕçлекен Лавренăв, Зайцĕв бригадисем çирĕмкунлăх пуçланнăранпа нормăна куллен иртерсе тултараççĕ. Çĕнĕ стахановеçсем çитĕнчĕç. Строителствăра пысăк тухăçлăхпа ĕçлекен колхозниксем те сахал мар. Шупашкар районĕнчи „Кукшум“ колхозран пынă бригадă хăйĕн обйазательствине ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пырат̆.

Анчах строителствă ĕçĕ халĕ те çителĕксĕр пулса пырат̆-ха. Стахановла çирĕмкунлăхăн малтанхи вунă кунĕ хушшинче татăклă улшăнусем туман. Çирĕмкунлăх пуçланиччен-хи вунă кун хушшинче тунă ĕçсемпе танлаштарсан 20 пиņ тенкĕлĕх ытларах кăна ĕçсем тунă.

Ку тарана çитиччен чукунçул строителствин управлени руководителĕсем, çавнашкалах участкăсен начаļникĕсем ĕç начар пынин ĕç вăйĕ çителĕксĕрринчен килет, тетчĕç. Ку тĕрĕс пулнă тейĕпĕр. Анчах мĕншĕн-ха халĕ ĕçлекенсен хисепĕ ÿссе пынă вăхăтрах, строителствă ĕçĕ пĕр вырăнтах тăрат̆? Çент̆абĕрĕн 11-мĕшĕнче 1573 çын ĕçленипе 28 200 тенкĕлĕх ĕçсем тунă. Çент̆абĕрĕн 13-мĕшĕнче 2303 çын ĕçленипе 28 500 тенкĕлĕх ĕçсем тунă. Çапла 700 çын ытларах ĕçленипе те 300 тенкĕлĕх кăна ытларах ĕçсем тунă. Ку йенĕрĕ, строителствă руководителĕсем тата инженерла-техникла работниксем хăйсен ответлăхне туйса ĕçлеменни, ĕçе организацилесси çине çăмăллăн пăхни çинчен калат̆.

Строителствă руководителĕсем те, строителствăри партипе профсойуз организацисем те ĕçлеме пыракан колхозниксене ĕçре тĕрĕс организацилес тĕлĕшпе ĕçлемеççĕ. Строителствăра çирĕп йĕрке-лĕх çук. Дисциплинăна пăсни работниксем хушшинче хытă сарăлнă. Çент̆абĕрĕн 10-мĕшĕнче Кудисăв маçтăр рабочисем хушшинче ĕçлес вырăнне, производствăран тухса кайнă.

Строителствăна кирлĕ материалсене тăратман пирки час-часах простойсем пулаççĕ. Пуйăссем çÿретекен кантур (начаļникĕ Родионăв) вакунсем вăхăтра тăратмаст̆, лини çине хăйăр сарасси йулса пырат̆. Вунă кунран пĕринче те хăйăр турттарас плана тултарман.

Стахановла çирĕмкунлăх пуçланас умĕн Шупашкар, Ишлей, Çĕрпÿ, Шăхасан, Канаш т. ыт. районсем чукунçул строителствинче ĕçлеме кирлĕ чухлĕ ĕç вăйĕ организациleме обйазателствăсем илнĕ. Вĕсенчен пĕри те хăйĕн обйазательствине ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пымаст̆. Çавна пула строителствăра ĕç вăйĕ халĕ те çителĕксĕр.

Строителствăри руководителсен, инженерла-техникла работниксен, районсенчи партипе совет тата комсомол организацисен хисеплĕ задачи—пĕтĕм вăйа хурса ĕçлесе, чукунçула експлоатацине вăхăтра памала тăвасси пулат̆.

Скандинави çыранĕсем тавра

„Иосиф Сталин“ пăрçĕмренĕн малтанхи ишевĕ

— Сулахайри, пĕчĕкки, кайала!—команда пачĕ поļар капитанĕ тăватă орден илнĕ Владимир Иванăвич Воронин. Пит те пысăк карап тинĕс причалĕн гранитлă стенинчен йăвăррăн уйăрăлса ишме пуçларĕ.

„Иосиф Сталин“ пăрçĕмрен Ленинградри суту-илÿ портĕнчен августăн 23-мĕшĕнче каçхине тухрĕ. Ана Ленинград ĕççыннисем пысăк çитĕнÿсем тума хĕрÿлĕн ырă сунса ăсатрĕç. Пăрçĕмрене ăсатакансен шурă тутрисем çыран тăрăх чылай вăхăт вĕлкĕшрĕç.

Таçăн ларакан карапа ансăр та ăшăх фарватĕрте ăста çавăрса, Воронин çна малтанхи пысăк ишеве шанчăклăн илсе кайрĕ.

„Пăрçĕмрен çинчи пуриăç порт-ран тухсанах вĕреме пуçларĕ. Серго Орджоникидзе йачĕпе тăракан карапсем тăвакан савăт коллективĕ тунă пит те пысăк ишекен предприйати, советăн ытти çĕнĕ стройкисем пекех, етемшĕн сталинла атте пек тăрăшнине палăртса пачĕ. Шалти пÿлĕмсене ăнăçлă ĕçлемеле тата лайăх канмала плавласа тунă. Кайутăсене радио кĕртнĕ, çемçе дивансем, шкафсем, сĕтелсем лартса тухнă, линолеумсем, ковйорсем сарнă. Телефонсем командă тата експедици составĕн кайутисене мĕн пур службă пÿлĕмĕсемпе çыхăнтарăççĕ. Хаклă йышши йăвăçсемпе тунă кайут-компанире — ройаļ, Пĕрремĕш каçрах кайутăсенче патефон сассисем йанрама пуçларĕç.

Сулахай бортран електричествă çутипе йăлкăшакан Петергофпа Ораниенбаум курăнса карĕç. Пăрçĕмрен хамăрăн шанчăклă дозор—Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ тинĕс флочĕн вичкĕн хуралакан тăван çырансем çывăхĕнчен совет шывĕсем тăрăх ишсе пырат̆.

Карапсем усă тинĕсре социалисăмлă хăватлă державăн йалавĕсемпе пире хирĕç пырса, Арктикă флочĕн флагманне салют параççĕ.

Епĕр тăван çĕршывран кашни кун инçерех те инçерех кайатпăр. Финляндии çыранĕсем тĕтĕмлĕ инçете йулчĕç.

Даго, Езеļ, Готланд тата Борнгоļм утравĕсенчен иртсе, пăрçĕмрен Швеции кăнтăр çыранĕсем патнеле çывхарчĕ. Палубăран биноклĕпе пăхсан нумай халăхлă дачăлă тата курортлă районсем курăнма пуçларĕç. Часах Боļшой Беļт проливне кĕтĕмĕр, Балти тинĕсĕ хыçала йулчĕ ĕнтĕ. Борт çине Дани лоцманĕсене лартнă карап Дани симĕс çыранĕсем хушшинче пырат̆. Хресченсен пысăках мар уйĕсем, вăрмансем тата хуласен хаприк трубисем чĕретлĕн иртсе йулаççĕ. Августăн 27-мĕшĕнче теплоходсем, поромсем Скандинавипе Хĕвелйăç Иевропăри хуласем хушшинче çÿрекен чукунçул поййăçĕсем, тинĕс урлă каçакансксерсем, составĕ составĕпе пире хирĕç пулчĕç.

Августăн 28 мĕшĕнче ирхине Дани лоцманĕ пăрçĕмрен çинчен анса пире телейлĕ çул сунчĕ. Каç пулнă тĕле епĕр Норвеги кăнтăр çыранĕсем патнеле çывхартăмăр та ĕнтĕ.

Çурçĕр тинĕсĕ пире малала ăнăçлăн кайма чăрмантарчĕ. Тавралăх тĕтреленĕ. Владимир Иванăвич Воронин куçĕ патне биноклĕ тытнă та капитан мостикĕ çинчен анмаст̆пе пĕрех. Штурмансем пăрçĕмрен хăш вырăнта пынине пĕлме пĕр вычислени хыççăн тепĕр вычислени тăваççĕ.

Норвеги тинĕсĕ пире кăпăкланнă пит те пысăк хумсемпе кĕтсе илчĕ. Пысăк карап чÿхенме тытăнчĕ. Кайутăсенче сĕтел-пуканcем вырăнтăн вырăна куçса ларчĕç...

Поļар кругĕ тĕлĕнче тинĕс лăпланчĕ, кайран Мурманска çитиччен карап малала лайăх çанталăкра ишсе пычĕ. Запоļарйере Скагеррак проливĕнчен те ăшăрах пулчĕ. Гоļфстремăн ăшă йухăмĕ кунта инçетри çурçĕре пырса тинĕсе шăнса пăрланасран сыхлат̆.

Çент̆абĕрĕн 1-мĕшĕнче ирхине пăрçĕмрен Йевропă материкĕн—Нордкап сăмсалăхĕн чи çурçĕр йенчи вĕçне çавăрăнса илчĕ. Бирйузă пек тинĕсе анакан пысăк чултусем, тĕлĕкре курнă пек, тĕтрен аметислă вуаļĕ витĕр ишсе иртрĕмĕр.

Совет патриочĕсен чĕрисем хăвăртрах тапма пуçларĕç—пăрçĕмрен тăван çыраисем патнеле çывхарчĕ. Норвеги Варде крепăçĕн постройкисемпе майакĕсем хыçала йулчĕç ĕнтĕ.

Çент̆абĕрĕн 2-мĕшĕнче каçхине совет çыранĕсен майакĕсем çуталчĕç, ун хыççăн сыхланса хуллен, фарватĕрсене тĕплĕн тĕрĕслесе, пăрçăмрен Коļски губине ишсе кĕчĕ те ирхине Мурманск порчĕн кĕтесри гаванĕ çумне пырса ларчĕ.

Пăрçĕмрен-флагманăн малтанхи ишевĕ ăнăçлăн иртрĕ. Совет маркин машинĕсемпе механисăмĕсем малтанхи пысăк испытанине лайăх тытрĕç. Ишев кунпа пĕрлех пăрçĕмренĕн сывлăхлă коллективĕ, чаплă çынсем—малта пыракан техникăна алла çавăрса илекен ентузиассем пулнине кăтартрĕ. Пăрçĕмренĕн руководствипе общественнăçĕ ПСÇЛКС ХХ çул тултарнă йатпа тăракан сменăри кочегарсен старшинин—коммунис-орденоносĕц Короļковăн чаплă ĕçне тĕрĕс паллă турĕç. Унăн портречĕ, пирĕн Шафранпа Шкоļникăв кинооператăрсем тăрăшса тунă пĕрремĕш фотохаçата илемлетрĕ. Пăрçĕмрен Мурманска пынă кун тĕлне кăларнă карап çинче нумай тиражпа тухакан „Сталинеç“ йатлă хаçат Короļков пурнăçĕнчи чаплă епизода кĕртнĕ. 1936 çулта „Литке“ пăрçĕмрен Шпицберген çыранĕсем патне пынă чухне вăл—гипса çыхнă хуçăк урипе кайутăра выртнă. Шторм пуçланнă, Короļков гипспа çыхнине татса ывăтнă та тинĕспе кĕрешсе ывăннă хăй йертсе пыракан кочегарсен бригадине пулăшма вахтăна туйапа туйаланса кайнă. Вунпĕр баллă циклон карапа айаккинеле тайăлтарнă, хум матчăсене шывпа сирпетсе карапа хулăмăн пăрлантарнă. Шыв кĕрлесе çĕмĕрсе кĕрсе кочегаркăпа трÿм хушшинчи стенана çĕмĕрсе тăкнă. Чăкăтсем, сысна какайĕсем, ваннă консервă банкисем кăмракпа хутшăнса ишсе çÿренĕ. Шыв хурансене илсе машинăна ĕçрен кăларас хăрушлăх тухса тăнă. Сивĕ шыв çинче чĕркуççи таран туйи çине тĕрĕнсе, Короļков кунта та хăрушлăхпа пĕр хăрамасăр кĕрешнĕ.

Короļков „Иосиф Сталин“ пăрçĕмрен çинче пĕччен мар. Короļковсем кунта нумай, паллах карап государствă заданине вĕсемпе лайăх пурнăçа кĕртет.

Флагман çинче талăкра икĕ хут радиохаçат тухса тăрат̆. Ăна пăрçĕмренĕн хăватлă радиоузелĕ сарат̆. Хаçат çитменлĕхсене хытă хĕртет, малта пыракансене ырлат̆, парти, профсойуз тата комсомол организацисене пулăшат̆, Çурçĕр тинĕс çулĕн Тĕп Управленийĕн куçса çÿрекен хĕрлĕ йалавне илес тĕлĕшпе пыракан социалисăмлă ăмăртăва сарса йама пулăшат̆. Ку ăмăрту хăй тавра çĕнĕрен çĕнĕ морйаксене йăвăçтарса куллен-кун сарăлса пырат̆.

Пăрçĕмхпа калаçан, кунта партилĕ тата общественлă пурнăç çăлкуç пек тапса тăрат̆. Парти вĕренĕвĕн çирĕп кружокĕсем организациleççĕ. Кулленхи политикăлă лару-тăрусене, парти историне, Сталинла Конституцине т. ыт. те вĕренмели кружоксем тăваççĕ. Партипе профсойуз организацисем кавушăн тимлĕн тăрăшаççĕ. Пăрçĕмрен çинче лайăх выļăса кăтартнă духовой оркестр пур, фотокружок ĕçлеме тытăнат̆, Çурçĕр тинĕс çулĕн Тĕп Управленин килĕшнипе çитес кунсенчех карап çинчи техникумра заļатисем пуçланаççĕ. Вăл техникум штурмансемпе механиксем вĕрентсе кăларат̆. Ленинградран Мурманска кайнă çул çинче пăрçĕмрен морйаксем икĕ фиļм: „Мы из Кронштадта“ тата „Запорожец за Дунаем“ курчĕç.

Пăрçĕмрен çинче Арктикă институчĕн ăслăлăх експедицийĕ пур. Вăл експедицине Войеводин йулташ йертсе пырат̆. Вăл лабораторилĕ тата лайăх хатĕрсемлĕ експедицин задачине пăрçĕмрен пахалăхне тата унăн пăр çĕмрессин пахалăхне тĕпчесе вĕренесси кĕрет.

Пăрçĕмренĕн виçĕ машинăран—икĕ „П-5“ самоļотран тата пĕр „У-2“ самоļотран тăракан авиозвеновĕн ļотчикĕсем пысăк ĕçе хатĕрленеççĕ. Вĕсен, карапăн штурманĕсемпе пĕрле пăрсем çине разведкăна вĕçсе каймала.

Пăрçĕмрен-флагман социалисăмлă çĕршывăн йалавне тăватă тинĕс—Балти, Çурçĕр, Норвеги тата Баренцово тинĕсĕсем тăрăх илсе тухса Мурманскăна пычĕ. Кăрăк тата икĕ çул пурăнмалăх çимĕçсем тийесе, пăрçĕмрен малала—Совет Арктикине—заданине кăтартулă пурнăçа кĕртме хатĕр кайат̆.

Й. Капырин.

(„Иосиф Сталин“ пăрçĕмрен борчĕ çинчи ТАСС-ăн йатарласа кайнă корреспонденчĕ“).

Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи çĕнĕ хуласем

Совет Инçет-Хĕвелтухăçĕ çинчен калакан географи карттисем тата справачниксем хăвăрт кивелсе пыраççĕ. Халĕ, сăмахран, 1930 çулта каларнă Инçет-Хĕвелтухăç кравĕҥ карттипе уса курма йавар—унăн санĕ пит те вайлăн улшăннă.

Карттă çинче Амур шывĕн кăвак йĕрĕ хура çаврашкапа илемленнĕ—кунта сталинла иккĕмĕш пилĕкçуллăхра çуралнă Комсомољск хулине паллă тунă. Нумай пулат и-ха вăл выранта хăйĕн тискер, тухса çӳреме çук чăтлăхсемлĕ ĕмĕрхи тайга тăни! Халĕ ак вайлă та тулли шывлă Йуханшыв хĕрринче промышлĕннăçлă тата куљтуралă пысăк центр вырнаçсаларна. Унта 100 пин çын пуранат, унтах пысăк чукунçул станци, гигант пек саватсем, електростанци, арман комбиначĕ тата хаљхи вăхатра ĕçлекен тата туса пĕтерсе ĕçе йама хатĕрлекен ытти предприйатисем темиçе теçетке пур.

Комсомољск хулин кăçалхи бюджечĕ пелтĕрхи бюджетран 80 процент ытларах: вал 19,4 мĕлйун тенкĕ. Хулара: театр, 9 клуб, шкулсем, техникумсем, строителства институчĕ пур. Тăватă хаçат тухса тăрат. Амурăн чаплă та илемлĕ çыранĕсем çамрăклăх хули ĕççыннийĕсемшĕн питĕ лайăх канмали выран пулса тăраççĕ.

Край картти çинче Комсомољскран çурçереле, Охотски тинĕсĕн нумай заливĕсем хушшинче Нагайево йатла бухтă пур. Пĕр 4—5 çул хушшинче кăна бољшевиксем кунта çĕнĕ хула, ылттанлă Колымă столицине—Магадан хулине туса лартнă. Питĕ лайăх тунă шоссе çулĕ ăна нумай приискăсемпе, рабочисен поçолăкĕсемпе çыхантарса тăрат. Çав çынсем пуранакан пунктсем патне илсе кайакан çул 4—5 çул кайала çын ури килсе пусман вырансемпе кайат.

Нумай пулмаст Инçет-Хĕвелтухăç чукунçулĕ çинче Тихонькая йатлă пысăк мар станцă пулнă. Хале кунта йеврейсен автономлă облаçĕн столици—Биробиджан хули.

Ку хулара—пуçламĕш шкулсем, туллимар вăтам шкулсем тата вăтам шкулсем нумай, йалхуçалăх техникумĕ, медицинă шкулĕ, чукунçул техникумĕ пур.

Уссурийск облаçĕнче Лесозаводск йатлă хула ӳснĕ. Кунта крайри чи пысăк вăрман комбиначĕ пур.

...Комсомољск, Магадан, Биробиджан, Лесозаводск, Сучан—çак хуласем пурте сталинла пилекçуллахсем хушшинче ӳссе çитенне хуласем пулса тăраççĕ.

Тепер çулталăк йе икĕ çулталăк иртсен, Инçет-Хевелтухăç картти çинче татах çене хуласен паллисем пулĕç. Совет Сахалиненче крайри нефт промышленнаçĕн центре пулса тăракан Оха хули пите вайлă ӳсет. Татарски пролив хĕрринче нумай çынсем пуранмали пункт—Советскайа Гаваҥ портне таваççĕ. Рабочисен поçолакесем: Артем, Тетухе, Анадырь—весем те чечекленсе пыракан Инçет-Хевелтухăç крайĕн хулисем пулмаласкерсем.

(ТАСС).

Йавăр промышлĕннăçра Блидман йулташ метачĕпе усă кураççĕ

Йавăр промышлĕннăç йенĕпе ĕçлекен чылай предприйатисенче тийес-пушатас ĕçсене орденовосĕц Блидман йулташ метăчĕпе организацилеççĕ. Главуголљ тăрăх кумĕтада Ленинуголь трестăн (Кузбасс) „Комсомолец“ шахтинче ĕçе кертнĕ. Резуљтатсем—пит чаплă. Кунччен малтан икĕ рабочи алăпа çирĕм тоннăлă вакуна кăмрăк 2 сехет те 30 минут хушши тийенĕ, Блидман йулташ метăчĕпе тунă транспортерсемпе ĕçлесе çирĕм тоннă кĕрекен вакуна пилĕк минут хушшинчех тийесе лартаççĕ.

* * *

Йавăр промышлĕннăç Халăх Комиссариачĕ грузчиксемпе механизаторсен квалификацине ӳстерме кĕске срукла курссем организацилет. Курссем октабер уйăхĕнче Сталино хулинче (Донбасс) тата Свердловскра уçăлаççĕ. Вĕренекенсем чи лайăх грузчик-стахановецсем пулаççĕ. Весем хăйсен ĕçĕсем çинчен пĕр-пĕрне каласа парĕç тата Блидман йулташ метăчĕ тăрăх тийес-пушатас ĕçĕн техники çинчен лекцисем итлемеле.

(ТАСС).

Памйатник лартнă

Çак кунсенче Полтавă облаçĕнчи Жуковцы йалĕнче В. И. Ленин памйатникне уçнă. Памйатник уçнă çĕре виçĕ пин колхозник ытла пынă.

КОЛХОЗНИКСЕН ЕМĔЧĔСЕМ

Тавăтри (Елĕк р.) колхозниксем кăçалхи тупăша валеçес ыйтăва сӳтсе йаврĕç. Пухура стаханăвецсем 18 колхозник ĕçкунĕ тăрăх тивекен укçапа патефон илме шухăшлани çинчен пĕлтерчĕç. Весем правленирен пулăшу ыйтрĕç 5 колхозник икĕ ретлĕ хут купăс илме заказ пачĕç.

Куљтурлă çĕнĕ пӳртсем туса лартнă 8 колхозник пӳрт çине тăмпа-улăмпа хутăш витме шухăшлаççĕ. Правлени вĕсене çапнă кĕлтесем парса пулăшма пулчĕ. Тата чылайĕшĕ колхозăн ферминчен сыснасем туйанас терĕç.

А. Соловйов.

„Красный пограничник“ колхозра (Молдави АССР) хор студийĕ организациленĕ.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Студире йурлакан колхозницăсем. Сылтăмран: Годыба, Бертовă, Гренул, Пырвул, Бенда, Патиенко, Гуржий тата Каска йулташсем.

М. Рыжак фото-ӳкерчĕкĕ (Сойузфото).

ВКЛАДЧИКСЕМ ХУТШĂНСАХ ПЫРАÇÇĔ

Шăмат (Йетĕрне р.) пуштă агентстви çумĕнчи перекет кассинче вкладчиксен хисепĕ йышлансах пырат. 1937 çулта вкладчиксем 66.526 тенкĕ те 40 пус хывнă. 1938 çулта 8 уйăх хушшинче перекет кассине вкладчиксем 65 579 тенкĕ те 33 пус хывнă.

Кăçал иртнĕ çулхинчен 45 вкладчиҥ ытларах.

Перекет касси кăçал займ выљăвĕсем тăрăх 2.500 тенкĕ те 50 пус тӳленĕ.

С. Н. Важорăв.

Футбол

Кам мала тухат?

Футбол вăййипе республикăри малти вырăна тухассишĕн пынă ăмăртун малтанхи тапхăрне выљаса пĕтерчĕç. Кунта 5 командă тĕл пулса выљанă. Шупашкарти „Спартак“ обшчĕстви командии Сĕнтĕрвăрри хулинчи командăна 6:0 шутпа, Шупашкарти темпăвĕцсем Йетĕрне хулинчи командăна 4:0 шутпа çĕнтернĕ. Шупашкарти „Буревестник“ командине Çĕрпӳ хулинчи командă çĕнтернĕ. Улатăрти „Локомотив“ команди „Динамо“ командине 5:3 шутпа çĕнтерсе, финала тухнă. Йĕпреçри „Спартак“ команди Патăрйел командине çĕнтернĕ.

Халĕ полуфинала тухасшăн Шупашкарти „Темп“ тата „Спартак“ командисем çеҥтаберĕн 22-мĕшĕнче Шупашкарта, Йĕпреçри „Спартак“ командипе Çĕрпӳ хулинчи командă Çĕрпӳре выљаççĕ. Çĕрпӳпе Йĕпреç командисем хушшинчи вăйăра çĕнтернĕ командă тӳрех финала тухат. „Темп“па „Спартак“ командисенчен те çĕнтерекенĕ финала тухат. Кун хыççăн вара 3 командă: „Локомотив“, „Спартак“па „Темп“, Çĕрпӳ хулинчи тата Йĕпреçри „Спартак“ хушшинчи вăйăра çийеле тухнă командăсем финала тухаççĕ. „Локомотив“ командисĕр пуçне, мала тухнă командăсем шăпа йарса „Локомотив“ командипе тĕл пулса выљаççĕ.

Çав командăсенчен футбол вăййипе республикăри малти вырăна хăшĕ йышăнат? Çак ыйту халĕ нумайĕшне интереслентерет.

Тӳрех калас пулат, мала тухас шанчăк „Локомотив“ команди çинче ытларах. Шупашкарти „Спартак“ командин нападени вăйсăр, „Темп“ командин полузашчитă начарланнă. Çапах та çак виçĕ командă хушшинчи вăйă питĕ интереслă пулмала, мĕншĕн тесен вĕсем пурте пĕр пекрех командăсем.

Çулйĕрсене халĕ йусамала

Йĕпреç. Район кăçалхи çулйĕр планне çеҥтаберĕн 2-мĕшне пĕтĕмпе те 27 процент çеç пурнăçланă. План тăрăх кăçал районĕпе тăватă километр шашкă сарса тухмала пулсан 1 километр ытларах çеç сарнă. Вунвиçĕ километр çĕнĕрен çул тăвас выранне тăватă километр çеç тунă. Виçĕ кĕпер çĕнĕрен тумала, çичĕ кĕпер йусамала пулнă. Ку ĕçе тытăнман та.

Çулйĕр ĕçĕнче уйрăмăнах Туçа, Упакасси йалсовечĕсем тата „Коминтерн“ колхоз начар ĕçлеççĕ. „Коминтерн“ колхозăн 3 кĕпер йусамала, 180 кубла метр хăйăр хатĕрлемеле пулнă. Колхоз председателĕ Павлăв йулташ тăрăшманнине пула вуçех хатĕрлемен. Туçапа Упакасси йалсовечĕсем те çаван пекех нимĕн те туман.

Хумри Ишекре 1935 çулта кĕпер тума йавăç каларнă пулнă. Нумай выртнипе вăл йавăç çерсе кайнă, чылайĕшĕ çухалнă. Ишексене кăçал каллех кĕпер тума йавăç панă, анчах пайанхи куна та ăна турттарман. Хырхĕрри йалĕнче кĕпер начаррипе лаша урине амантнисем пĕрре кăна пулман. Ку кĕпер кăçса çӳреме йурăхсăр.

Çулйĕр планне тултарас пулсан районепе петĕмпе 2 пинтен кайа мар çуран çын, 800 çынтан кайа мар лашапа ĕçлемеле. Пайанхи куна çул çинче çураннисем 140 çын, лашапа 56 çын ĕçлеççĕ.

Çулйĕр ĕçенче аван ĕçлекен колхозсем те пур. „Чувашия“ колхоз çулйĕр планне ытлашшипех тултарнă. Вал 580 кубла метр хăйăр турттарса хатĕрлерĕ. 100 кубла метр ытла торцовка сарчĕç. Ку ĕçре çулйĕр ĕçепе ĕçлекен бригадир Майорăв йулташ тăрăшса ĕçлет. „Заветы Ильича“ (бригадире Жарков), „МОПР“ (Петров) колхозсем те аван ĕçлеççе. Вĕсен паха опычĕсем ытти колхозсене çитеймен-ха.

Çулйĕр планне пурнăçлама пур майсем те пур. Чылай колхозсем тырпула пуçтарса кĕртрĕç.

В. Вишневский.

Йачейкă ĕçĕ лайăхланса пырат

Патăрйеленчи (Патăрйел районĕ) „Ленин çулĕ“ колхоз çумĕнчи МОПР йачейкинче 126 член пĕрлешсе тăраççĕ. Член укçине иккĕмĕш кварталшăн пухса çитернĕ, халĕ виççĕмĕш кварталшăн пухаççĕ. Испани республикĕнчи ачасемпе хĕрарăмсене пулăшас шутпа 81 тенкĕ укçа пухса панă.

Йачейкăна организацилени 5 уйăх ытла иртрĕ. Çак хушăра МОПР членĕсен пухăвĕ икĕ хутчен пулнă. Вĕсенче МОПР задачисем, МОПР Тĕпкомĕн 6-мĕш пленумĕн решенисем, йачейкăн ĕç планĕсем тата ыттисем çинчен те тĕплĕн сӳтсе-йавнă. МОПР ыйтăвĕсене ытти организацисен пухăвĕсенче те ăнлантарса панă.

МОПР йачейки вăрçăлă турă сăрсен Сойузĕн йачейкипе перле тĕне хирĕç вечăрсем иртернĕ.

Йачейкă членĕсем час-часах пĕрле пухăнса хаçат-журналсем вулаççĕ. Йачейкă 5 екземпљар „Интернациональный маяк“ журнал çыранса илет. Членсем МОПР бӳллетенĕ кăларса тăраççĕ. Бӳллетен уйăхра икĕ номĕр тухат. Йачейкă ĕçĕсене ăнаçлăн туса пыма бӳро членĕсем (председател Каримăв, çекретар Андрейăвă, членĕ Харитонăвă) партипе комсомол организацисемпе тата МОПР райкомĕпе тачăн çыхăнса ĕçлеççĕ.

Активиссен хисепĕнче вата колхозниксемпе колхозницăсем нумай. 55 çула çитнĕ А. Тасаковă, 50 çула çитнĕ Кариллăвă йулташсем йачейкă ĕçĕнче те, хуçалăхпа политикалă ĕçсенче те хăйсен хастарлăхне кăтартаççĕ.

Ф. Тимофейĕв.

Йалсовечĕн тĕрĕслемеле

Упи (Трак р-нĕ) йалсовечĕ çумĕнчи вулав çурчĕ начар ĕçлет-ха. Вулав çурчĕ çумĕнче нимĕнле кружок та организацилемен. Çтена хаçачĕ тухмаст. Ку тарана çитсе те ССР Сойузĕн Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕн йышăннă саккунсене колхозниксемпе йединоличниксене ăнлантарса паман.

Вулав çурчĕн икĕ радиоприйомник пур. Анчах вĕсенчен нихăшĕ те ĕçлемеççĕ. Библиотекăран кĕнекесене илсе вулама май çук. Мĕншĕн тесен, вулав çурчĕн пуçлăхĕ В. Иванов вулав çуртĕнче сахал пулат. Çавна пула вулав çуртне пыракансен шучĕ нумай чакрĕ.

Упи йалсовечĕ вулав çурчĕн ĕçне тĕрĕслемест. Районри çутеç пайĕнче ĕçлекенсем те вулав çурчĕн ĕçĕпе интересленмеççĕ, ĕçре пулăшу пани çук.

А. Кисељов.

Ĕçлекен мар, хулиган

ТУРХАНТИ (Хĕрлĕ Чутай р-нĕ) вулав çурчĕн пуçлăхĕ С. Уљйанăв колхозниксем хушшинче куљтурăлă-массăлă ĕçе организацилес тесе нимĕн те тумаст. Хаљхи вăхăтра пур çĕрте те ССР Сойузĕн Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕн йышăннă саккунсене ăнлантарас ĕç пырат. Анчах С. Уљйанăв кун çинчен аса та илмест.

Вулав çурчĕ йăчĕпе килнĕ хаçат-журналсем йалсовет канцељаринче выртаççĕ. Çтена хаçачĕ тухманни 4—5 уйăх çитет ĕнтĕ. Вулав çурчĕ çумĕнче нимĕнле кружок та ĕçлемест. Спектакљсем, вечăрсем çинчен каламали те çук. Вулав çуртĕнче куљтурăлă-массăлă ĕçе организацилес выранне, С. Уљйанăв усĕрпе йал хушшинче хулиганла ĕçсем туса çӳрет.

Мих. Бељаковский.

Тĕп библиотекăра

Оборудованисене чылай йусанă хыççăн, Шупашкарти Максим Горький йăчĕпе тăракан Тĕп библиотекă вăйлăн улшăнчĕ. Ку таранччен кĕнеке-хаçат вуламали зал пĕрре çеç пулнă, халљ кунта виçĕ зал тунă. Вулакансене кĕнекесем парса пулăшассипе палăрмалах лайăхланчĕ. Август тата çеҥтабĕр уйăхĕсенче кăна ăслăлăх, илемлĕ литературă тата обшчествăлă-политикалă литературă кĕнекисене 2 пин екземпљара йахăн çĕнĕрен илнĕ.

Хаљхи вăхăтра республикăри Тĕп библиотекă вырăнти библиотекăсене методикă йенчен йертсе пырассине вăйлатат. Ку тĕлĕшпе библиотекăра йатарласа уйăрнă методист ĕçлеме пуçлат.

Республикăри Тĕп библиотекă валљи Шупашкарта çĕнĕ çурт тăвас ыйтăва çывăх кунсенчех татса параççĕ, халљ вăл çуртăн пройектне хатĕрлеççĕ. Библиотекăн хаљхи çуртне хула библиотеки валљи параççĕ.

13 çул почтаљйонра

Нурăс (Турхан р.) йалĕнчи Петр Астафйĕв почтаљйонра кăçалхипе вунвиççĕмĕш çул ĕçлет. Халљ вăл çӳрекен йалсенчи кашни хуçалăхах хаçат-журнал илсе тăрат. Хаçат-журнал сарассипе лайăх ĕçленĕшĕн вăл темиçе хут та премиленĕ.

Ленинла-Сталинла комсомол XX çул тултарнă уйăв тĕлне вăл кашни хуçалăхах 2-шер екземпљар хаçат-журнал çырăнтарассишĕн тăрăшса ĕçлет.

Ваç. Ибасов.

Шкул ачисем оборонă ĕçне вĕренеççĕ

Шупашкарти Крупскайа йачĕпе тăракан 3-мĕш номĕрлĕ шкулта оборонă кружокĕсем йĕркелĕн ĕçлеме пуçларĕç. ПВХО кружокне 50 ача çыранна, кружокăн пĕрремĕш занљати пулса иртнĕ ĕнтĕ. БГСО кружокĕ те ĕçлеме пуçлат, кунта 80 ача тăрат.

4-мĕш клас кăçалхи вĕренӳ çулĕнче отличнă вĕренессишĕн социалисăмлă ăмăрту пуçарса йанă. Класра кашнийех ăмăртат.

КĔСКЕН

** Çеҥтаберĕн 21-мĕшĕнчен пуçласа 27-мĕшне çитиччен Сĕнтĕрвăрри хулинче кĕркуннехи йармăркă пулса иртет. Суту-илӳ организацисем йармăркăна промтаварсем чылай илсе тухаççĕ. Çавăн пекех колхозсемпе колхозниксем тата йединоличниксем йармăркăна хăйсен йалхуçалăх продукчĕсемпе тухаççĕ.

** Йетĕрне районĕнче нумай ачалă çемйесен йышĕ çулсеренех ӳссе пырат. Кăçалхи августăн 1-ш тĕлне çавăн пек çемйесем районра 92 пулнă. Вĕсенчен чылайăшĕ 10—12 ачалă. Акă, Пăчанар йалĕнчи Анастаçийа Дмитрийĕвă колхозницăн 10 ача, Сарйел йалĕнчи Федоçийа Помошникăвăн 12 ача. Вĕсем хăйсен ачисене пăхса ӳстерме государствăран пулăшу илсе тăраççĕ.

ССРС Оборонине Тĕреклетмели Государствă Займĕн виççĕмĕш тиражĕ

Справкăлă таблицă

ССРС Оборонине Тĕреклетмели Государствă Займĕн 3-мĕш тиражĕнче пĕтĕм 53 разрйадсенче те çерисемпе облигацисен çак номĕрĕсем çине выљавсем тухнă (выљав сумми çине облигаци çинче кăтартнă хакне кĕртеççĕ):

Çерисен №№	Облигацисен №№	Выљаса илнĕ тенкĕпе	Çерисен №№	Облигацисен №№	Выљаса илнĕ тенкĕпе
20264	13*)	100	31427	1—50	150
20390	1—50	150	31763	42*)	500
20521	1—50	200	31810	1—50	200
20556	1—50	150	31970	1—50	200
20619	1—50	200	32302	12*)	500
20685	24*)	500	32801	27*)	500
20690	1—50	200	33012	1—50	150
20755	1—50	200	33208	1—50	200
20940	1—50	200	33251	17*)	500
21079	01*)	3000	34109	50*)	500
21183	44*)	500	34333	18*)	500
21214	1—50	200	34406	41*)	500
21221	37*)	500	34422	1—50	200
21289	1—50	150	34433	1—50	200
21660	08*)	500	34681	19*)	500
21798	29*)	500	34699	31*)	500
22185	32*)	500	34947	1—50	150
22219	43*)	500	35204	19*)	500
22638	1—50	200	35522	1—50	150
22943	1—50	200	35587	39*)	500
23027	1—50	200	35607	1—50	150
23043	37*)	500	35615	1—50	150
23462	17*)	500	35748	39*)	500
23855	08*)	1000	36306	36*)	500
24117	47*)	500	36474	43*)	500
24336	31*)	500	36518	17*)	500
24362	08*)	500	36552	49*)	500
24488	1—50	150	36838	49*)	500
25583	1—50	150	36856	1—50	150
25590	1—50	200	37249	45*)	500
25592	16*)	1000	37285	1—50	150
26078	15*)	500	37487	44*)	500
26217	31*)	500	37521	33*)	500
26318	1—50	150	37540	35*)	500
26421	1—50	200	37662	1—50	150
26661	07*)	1000	37842	1—50	150
26898	1—50	200	37971	1—50	150
27049	33*)	1000	38336	33*)	500
27186	07*)	500	38538	1—50	150
27622	28*)	500	38976	1—50	150
27878	47*)	500	39076	47*)	500
27889	12*)	500	39089	18*)	500
28140	08*)	500	39636	1—50	200
28193	1—50	150	39682	1—50	150
28538	15*)	1000	39794	1—50	200
28983	1—50	200	39835	42*)	500
29415	29*)	500	39883	1—50	150
30466	1—50	150	39949	21*)	500
30690	22*)	500	39964	09*)	500
31082	17*)	500	39988	1—50	150

*) Çак çеринчи облигацисен ытти 49 номĕрĕсем кашнийех 150 тенкĕ выљаса илнĕ.

Пулни-иртнисем

Çеҥтаберĕн 18-мĕшĕнче, каçхине 10 сехетре, Канаштан Шупашкара килекен 1142-мĕш №-лĕ пуйăс (машинист П. А. Смирнов) Ишлей станци тĕлĕнче, чукунçул урлă урапапа каçса кайакан Игнатий Иванова (Анатри Хорасан йал сынни, Елĕк р.) лашипе пĕрлех таптаса вĕлернĕ. Каç питĕ тĕттĕм пулнипе машинист чукунçул урлă урапа каçнине асăрхайман. Иванов ӳтне Шупашкар пуљницине асăрнă.

Илйинкă шкулĕнче

Илйинкăри (Тутаркас р-нĕ) туллимар вăтам шкулта пурĕ 350 ача вĕренет. Кăçал çĕнĕрен 57 ача илнĕ. Шкулта пурĕ 12 учител ĕçлет.

Учителсен кашнинех вĕренӳпе воспитани ĕçĕн планĕсем пур. Кашни учител урок мĕнле майпа иртмеллине çав план çине çырат.

Уроксене лайăх, интереслă иртерессишĕн учителсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Плансем çырнă чухнех вĕсем нагљаднăй пособисем—картинăсем, карттăсем, схемăсем хатĕрлеççĕ. Сăмахран, биологипе химине вĕрентекен учител М. Кошаков вĕçен-кайăксен скелечĕсене, çăмартисене, тĕрлĕ ӳсентăрансемпе чечексене пухса гербарисем тунă. Кунта ăна ачасем нумай пулăшаççĕ. Тĕрлĕрен вĕтĕ чĕрчунсене пухаççĕ. Анчах шкулăн биологипе хими кабинечĕсем çук. Хими урокне иртерме те хатĕрсем çителĕклĕ теме çук. Кантăк трубасем çукки хими урокне иртернĕ чухне чылай чăрмав кӳрет.

Географипе вĕрентекен учител Р. Çергейĕв 7 çул учителре ĕçлет. 7 çул хушшинче вăл педагогикă маçтăрлăхне чылай хăпартрĕ. Вал ачасене вĕрентнĕ чух мĕнле хатĕрсем кирлине план çинче кăтартса, малтанах çителĕклĕ хатĕрлесе хурат. Ачасене урокра тĕплĕн ăнлантарат. Учител ăнлантарнă хыççăн, ачасем ăнланман ыйтусене учителрен ыйтса пĕлеççĕ те ӳкермели пулсан ӳкереççĕ, вулаççĕ т. ыт. те.

Историпе тата ытти предметсемпе вĕрентекен учителсем те ачасене чăн-чăн пĕлӳ парас ĕмĕтпе тăрăшса вĕрентеççĕ. Урокра ăнлавмантарах ачасем пулсан, вĕсем урок хыççăн ăнланма тăрăшаççĕ, учител патне пыраççĕ, ыйтусем параççĕ.

Учителсем хăйсен пĕлĕвне, педагогикăлă ăсталăхне хапартассишĕн тăрăшаççĕ. Педагогикăна тата ПСК(б)П историне вĕренмели кружоксем ĕçлеççĕ. Кружоксем учителсене ĕçре пысăк пулăшу параççĕ.

Переменăсенче ачасем вăхăта хаçат-журнал вуласа, доминола йе урахла выљаса иртереççĕ. Анчах пурте мар, ачасем хаçат-журналсем сахал илеççĕ. Библиотекăра кĕнекесем çителĕклĕ мар. Шкулта „Отличник“ йатлă çтена хаçачĕ тухса тăрат. Хаçат вĕренӳре йулса пыракансене пысăк пулăшу парат. Çеҥтаберĕн 6-мĕшĕнче тухнă хаçатра „Не хотим быть битыми“ заметкăра ачасем социалисăмлă ăмăртăва Кузнецовăри (Мари республикĕ) туллимар вăтам шкулпа хутшăнни, ăмăртура мала тухассипе тумали ĕçсене тĕплĕн кăтартса çырнă. „Пурте отлично вĕренер“, „Вĕренӳри çитменлĕхсем“ т. ыт. заметкăсем те лайăх паллăсемпе вĕренсе пыма чĕнеççĕ. Çавăн пекех çтена хаçачĕсем отрйадсенче йĕркелĕ тухса тăраççĕ. Хаçатра „Командир пуласшăн“ йатлă пĕчĕк заметкă пичетленнĕ. Унта „Манăн питĕ вĕренес килет. Çитĕнсе çитсен хĕрлĕ командир пулатăп“, тесе çырса панă пĕрремĕш класа вĕренме кĕнĕ 8 çулхи Мишшă Колбасăв. Вăл вĕренме кĕриччененех çырма, вулама тата пĕчĕкрех задачăсене шутлама вĕренсе çитнĕ.

Анчах шкула çӳресси 89 процентран ытла ӳсеймест. „Осоавиахим“ колхоз счетовочĕ Ф. Данилăв V-мĕш класра вĕренекен ачине шкула йамасăр ача пăхтарат. М. Куçминăн ачи МТФ-ра ĕçлет. И. Кошкин ачине, пĕрремĕш класа пымаласкерне, шкула пама килĕшмен. Треҥкинăран 3 ача, Макаçран 1, Меменкассинчен 5 ача, Вăрманкассинчен 6 ача вĕренме пачах та çӳремеççĕ. Ача ашшĕ-амăшĕсем ачисене шкула йамасăр тăраççĕ. Ачасене 100 процентпех шкула çӳретессипе тивĕçлĕ организацисем те шкула пулăшни çук-ха.

М. Йакăвлĕв.

Ответлă редактăр Н. М. ÇЕМЕНĂВ.

„Чăваш Коммунĕ“ çыранса илме хакĕсем: пĕр уйăха 3 р. 50 пус. 3 уйăха 7 р. 50 п., 6 уйăха 15 т., çулталăка 30 тенкĕ. Подпискăна çыхăну уйрăмĕсем, письмоносецсем йышăнаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 494 Гор. Чебоксары, типография № 1 заказ № 711, ф. А. 58×84 п. л.